К66.36
П37
50014-кр/2

П.А.Платонов, Л.А.Платонова

Кӳкеҫпе Ишлей тӑрӑхӗнче

Кӳкеҫ - 1998 ҫ.

Платонов Николай Алексеевич родился в дер.Самуково Чебоксарского района. Окончив 8 классов в Икковской средней школе, поступил на I курс Чебоксарского строительного техникума и после завершения учебы два года отслужил в Вооруженных Силах на Семипалатинском испытательном полигоне. После службы в Армии работал бетонщиком, мастером в строительной организации. Окончил строительный факультет Чувашского госуниверситета. В 1984 г. был принят мастером цеха № 1 на Чебоксарский завод "Стройкерамика". На этом заводе работал в должностях инженера, начальника цеха.

В июле 1990 г. был приглашен на Ишлейский кирпичный завод для работы в должности директора, где трудится и по сей день.

Награжден знаком "За добросовестный труд в Потребкооперации России", почетными грамотами Чувашпотребсоюза и газеты "Тӑван ен". Студент-заочник 5 курса юридического факультета.

На общественных началах работает тренером по карать, редактором газеты "Ишлейская сторона". В свободное время увлекается шахматами и футболом, а так же участвует в концертах в составе Шоркинского фольклорного ансамбля.

С женой, Людмилой Алексеевной, воспитывает сына и дочь. Проживает в деревне Шоркино Чебоксарского района.

Çĕнĕ пӳрт

Пуçларăмăр эпир пын -
Гӗлӗм тăвăн çак ҫумăр кун.
Кӗр мăшăрпа сӑвăсăмăр,
Çак çӗнӗ пурлӗх пахалăмăн.

Хушса юрламалăх
Мӗнтерми пиемĕ -
Кӑмăлăн сăвăр сӳнмĕ,
Мӗнтерми вăйăпа
Çӗкӗ сирĕп пулăр.
Яланах ăшăтăр,
Пĕрмаях пуçарăр,
Чечексĕр пăчăтмĕр
Пирĕн хăйăм.

Сирĕн сывлăхăрпа тăнăç
Ялăн кăмăлтупăшăр сӳт -
Чунăр хӗвел, сирĕн курăнăр -
Сирĕнпе ҫывăх пикăсăр сут.

Çĕнĕ тăвăр пирĕн ҫăмăл,
Сăмăх ҫинче, чун сывлăмăш.
Манăн сутăк сирĕнпе ҫăмăл
Хăсăла анăр, хăсăла анăр.

ЛАПЛАТОНОВА
1995 ҫул, октябрь уйăхĕ

К 66.3
1717
О 50014-1/2
Платонов Н.А.
Кукеспе ишлей
1998 3 т.

О 50014-1/2

2001-68
К 66.36
П37

Н. А. Платонов, Л. А. Платонова

КӲКЕҪПЕ ИШЛЕЙ ТĂРĂХĔНЧЕ

-50014-обз 2109./2

Чебоксарская районная ЦБС

Кӳкеҫ — 1998 ҫ.

УДК 894.344
ББК 84 (2 Рос-Чув)
П 37

АВТОРТАН

Манăн атте, Алексей Платонович, калавсемпе статьясем çыратчĕ тата хаçат-журналта унăн материалĕсем тăтăшах пичетленетчĕç. Анчах халĕ вĕсене пурне те шыраса тупма питĕ хĕн.

Çавăнпа манăн хамăн, машăран статйисене пĕр çĕре пухса кĕнеке каларас шухăш çуралчĕ. Тата çак кĕнекене тепĕр 25—30 çултан çамрăк арава хальхи пурнăç çинчен. Шупашкар районĕн ĕç-хĕлĕ пирки тата паллă та сумлă çынсем мĕнле пураннине кăштах та пулин çутатса парĕ пулĕ тесе шутларăм.

Сарă хĕвел умĕнче пуç тайсах çапла калама пултаратăн: пĕччен кĕнеке каларма май çук. Кӳкеç типографинчи тата Шупашкар райхаçат коллективĕ питĕ нумай пулăшрĕ. Вĕсене пурне те тав сăмахĕ калатăп, çирĕп сывлах, ăнăçу сунатăп.

Уйрăмах «Таван ен» хаçатăн тĕп редакторĕ Юрий Петрович Степанов (Листопад) тата Кӳкеç типографийĕн директорĕ Геннадий Иванович Ильин кĕнеке каларма нумай вăй хучĕç. Пурнăç вĕсен малалла та ăнсах пытăр.

Н. А. ПЛАТОНОВ.

ISBN 5—86765—107—X

©Изд-во «Чувашия», 1998 г.

ЫРА ЯТА ТИВЕÇНЕ

1995 ç., утă уйăхĕн 18-мĕшĕ.

Самуккассинчи Платоновсен çемйинче 1921 çулта çуралнă Алеша саккăрмĕш ача, кĕçĕнни пулнă. Хресчен çемйинче çуралнăскер пĕчĕклех пултарулăхпа, кирек епле ĕçе те вăр-вар та питĕ тăрăшса тума хăнăхнипе паллăрнă. Хастарлăхне кура ăна ашшĕ-амăшĕ те вĕрентме тăрăшнă.

Çавăнпа та ĕнтĕ 1939 çулта Кӳкеçри вăтам пĕлӳ паракан шкула вĕренсе пĕтерсен тӳрех, питĕ лайăх палласемпе кăна вĕреннине шута илсе, Колешшари тулли мар вăтам шкула учитель пулса ĕçлеме яраççĕ ăна. Çак çулах кĕркунне ăна шкул заведующин ĕçĕсене туса пыма шанаççĕ.

Анчах та мал ĕмĕтлĕ çамрăк таран пĕлӳ илме ĕмĕтленнĕ. Çавăнпа та 1940 çулта вăл Шупашкарти педагогика институтне, физикăпа математика факультетне вĕренме кĕрет.

1941 çул Алексей Платонов пек нумай çамрăкăн çутă ĕметне татнă. Çĕршыва вăрçă çулăмĕ ярса илнĕ вăхăтра вĕренсе ларма вăхăт пулман. Алексейсен ушкăнне салатса яраççĕ. Вăл вара Çĕньял шкулне ĕçлеме куçать, анчах та нумайлăха мар. Октябрь уйăхĕнче каллех института таврăнать.

1942 çулхи декабрь уйăхĕнче 21 çулхи каччă, вĕренĕве вĕçлемесĕрех алла хĕç-пăшал тытса 76 миллиметрлă артиллери полкĕнче çапăçать. Анчах та Алексей Платонов пек çамрăксем тылра ытларах пулăшу пама пултарасса шута илсе, 1943 çулхи май уйăхĕнче ăна института каялла чĕнсе илеççĕ. Тепĕр çултан институтран вĕренсе тухнă çамрăк учитель Шупашкар районĕнчи Янаш, Шемшер шкулĕсенче вĕренекен ачасене физикăпа математика аслăлăхне алла илме пулăшать.

Каярахпа Кӳкеçри вăтам шкулта, Иккассинчи ун чухнехи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вăй хурать. Вăрçă хыççăнхи çулсем никамшăн та çăмăл пулман. Арканнă хуçалăха кунĕпе

ура çине тăратнă çĕрте вăй хунă çамрăксем (нумайăшĕ салтак çипуçĕнех) каçхине парта хушшине ларнă. Алла кĕнеке тытса пĕлӳлĕх тĕнчине хăйĕн пек тăрăшуллă та вĕренме пултаракан çамрăксене юратнă. А. Платонов вĕсене тӳрĕ кăмăлпа пулăшнă. Унăн вĕренекенĕсенчен нумайăшĕ аслă пĕлӳ илсе çĕршыв, халăх уменче ырă ята тивĕçнĕ. В. Марков, Г. Иванов, Г. Ирхи Мускавра аслă пĕлӳ илнĕ.

Уроксем вĕçленсен те Алексей Платонович тӳрех киле васкаман (çулĕ сывăх пулман пулин те). Шкулта математика, физика, фото тата ытти кружоксене ертсе пынă. Аслă шкула вĕренме кĕме ĕмĕтленекенсене пулăшнă.

1947 çулта, çĕнĕ çул умĕн Алексей Платонов Иккассинче çуралса ӳснĕ Нина Никитинапа пĕрлешсе çемье çавăраççĕ. Килĕштерсе те пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса пынипе çемьере тăватă ача çуралса ӳсет. Н. Никитина, 1942 çулта Çĕрпӳри фельдшерсен шкулне вĕренсе пĕтернĕскер, тивĕçлĕ канăва тухсан та хăйĕн юратнă ĕçне парахмасть. Вăл та машăрĕ пекех хастар пулнă.. Ĕç вăхăтĕнче кăна мар — каçхине те, çĕрле те чирлĕ çынна пулăшу пама тивнĕ. Çывăхра больница пулман пирки кашнех пулăшу ыйтма ялти фельдшер патне пынă. Сăпайла çемьере çитĕннĕ Владиславпа Николай аслă пĕлӳ илнĕ. Геннадий техникум пĕтернĕ. Вера вара Муркаш районĕнчи пĕр хуçалăхра вăй хурать. Ваттисем улми улмуççипе аякка ӳкмест теççĕ. Алексей Платоновичпа Нина Никифоровна ачисем те ашшĕ-амăшĕн ырă ятне ямаççĕ. Вĕсем те хăйсен хастарлăхĕпе, пултарулăхĕпе ырă ята тивĕçнĕ. Н. А. Платонов ертсе пыракан Ишлейри кирпĕч завочĕ, сăмахран, районти тупăшла ĕçлекен предприятисенчен пĕри.

«Ырă çын вилет — ырă ят юлать» теççĕ халăхра. Ку сăмахсен пĕлтерĕшне Алексей Платоновичпа Нина Никифоровна пурнăçĕ те аван çирĕплетет. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те çук пирĕн хушăра, çапах та «ырă тымартан — ырă хунав» тенĕ евĕр, Платоновсен несĕллĕхĕ малашнехи пурнăçра ырă ĕçпе ырă ят çĕнсе илĕ.

П. ПАВЛОВ.

КИРПĔЧ, КАРАТЭ, КУПАС, КАЛЕМ. Е ПАЯНХИ САМАНАРА АПТРАМАН ПĔР ЗАВОД ПУÇЛАХĔ ПИРКИ

1997 ç., утă уйăхĕн 31-мĕшĕ

Вулаканăм, ан ӳпкелешсем: нимĕнле цифрăсем те, экономика пĕтĕмлетĕвĕ-тишкерĕвĕ те илсе памастăп. Завод ĕçĕ-хĕлĕ те, унăн «дебет-кредичĕ» те машăн чăтлăх вăрман. Ончах пĕр завода ертсе пыракан директор çинчен ырă сăмах каламасăр чăтаймарăм. Тĕлĕнипе, саваннипе, паянхи йывăр пурнăçра та аптраман чăвашсем пурришĕн хĕпĕртесе.

Сăмахăм тăватă «К» çинчен пулĕ. Е мифсенчи тăватă кит тейĕпĕр: кирпĕч, каратэ, купас, калем. Сăмахсене тепе хурса ĕнтĕ хăйĕн пурнăç интересĕсене никĕсленĕ эпĕ сире паллаштарас тенĕ çын.

Мана тĕлĕнтернĕ чăн-чăн пуçлăх тата хĕрӳ чĕреллĕ чăваш — Шупашкар тăрăхĕнчи Ишлейри кирпĕч завочĕн директорĕ Николай Алексеевич Платонов. Унпа эпĕ кирпеч купалана чухне, нимере паллашнăччĕ. Кĕрнеклĕ, тапăл-тапăл кĕлеткеллĕ, сарлака хул-çурăмлă, çирĕп пусса утакан, майăхлă, вăтам çулсенчи арçын кирпĕчсене аллинче вылянтарать анчах.

Юлташăм калать: «Ку çын камне пĕлетĕн-и? Кирпеч завочĕн пуçлăхĕ вĕт вăл...» «Кирпĕч хуçи» кайран юлташа хăтăркаласа та илчĕ: кăмăлтан, хам камне пĕлтермесĕр ĕçлесшенчĕ терĕ. Вара упра темле пуçлăхлăх, манкăмаллăх çукки тĕлĕнтерчĕ мана, хăвăрт юлташланса кайрăмăр.

Мифологири кит сăнарĕпе усă куртăм та ĕнтĕ, шăпах Н. А. Платонов пурнăçĕн никĕсĕнчи пĕр кичĕ вăл — кирпĕч çапасси. Университетра инженер-строитель ĕçне алла илнĕскер, 1990 çултан пуçласа Ишлейри кирпĕч заводне ертсе пыраканскер, кирпĕч ĕçĕн чăн-чăн ăсти вăл. Хăйĕн заводне, пĕр сăвари «карап капитанĕ» пек, рынокăн «шавлакан хумĕсене» çентерсе малалла аталантарать. Çулла кирпĕч кăларать, хĕлле цехсенче кĕпе-тумтир çелеттерет — çынсене ĕçпе тивĕçтерме майсем шырать. Кирпеч — таврара чи çирĕпни, чи лайăххисенчен пĕри. Чи йӳнни те. Татăнах йӳнетсе сутать, халăх кăмăлне-пывăрлăхĕсене шута илсе. Хăй ĕçĕнче вăл Суворов пек шухăçан та «çук», «пултараймастăп» тесе каламасть.

Платоновăн тепĕр кичĕ вăл — каратэ. Унăн çак спортри ăсталăхне хĕрлĕ шҫиххине хаклана. Каллех тĕлĕнтĕм: вăхăчĕ сахалрах Николай Алексеевичăн, вăл вара каратэ спорчĕн

тренерĕ тата педагог пулса Иккассинчи шкулта секци ертсе пырать. Футбол мечĕкĕ хыççăн та чупма манмасть хĕрĕх урлă тинтерех каçнă арçын. Шахматла та мана тăрех çавăрса хучĕ. Урăхла каласан, сывă пурнăçпа пурăнать Николай Алексеевич.

Купăс - завод пуçлăхĕн тепĕр кичĕ. Концерт лартмалла-и, культура мероприятийĕ-и — директор купăс ярса тытать, туй халăхне те ташлаттарса-юрлаттарса савăнтарать. Купăспа выляса шалтах тĕлĕнтерет çынсене, хăй чăваш культурипĕн çунипне ĕнентерет. Шупашкар районĕнчи Шоркка ялĕнчи (хăйĕн тăван ялĕ) фольклор ушкăнĕнче те хаваспах юрлать-ташлать вăл, республика тăрăх гастрольсене те тухса çӳрет. Н. А. Платонов чунран-кăмăлран çӳрекен çак фольклор ушкăнне французсем те килсе тĕлĕнсе пăхнă, хăйсем патне, Эйфель башнин çĕршывне те чĕннĕ.

Калем (ручка, перо) тенĕрен (ку Платоновăн тăваттăмĕш кичĕ), Шупашкар районĕн «Тăван ен» хаçачĕ те, «Хыпар» халăх хаçачĕ те — завод директорĕн тусĕсем. Çырсах тăрать вăл, хăйĕн калемне мăкалма памасть. «Питĕ чăвашла çырас килет, çавăнпа хам мĕн курни-илтнине хаклă вулакансем патне çитерес терĕм», — тет хăй тĕллĕн журналист ăсталăхне алла илекен Николай Алексеевич Платонов пĕр статйинче, кăтăр чăвашĕсен пурнăçĕпе йăли-йĕркине сăнаса, хăй кăмăлне палăртса («Елчĕк тăрăхĕнче» статья, «Хыпар», 1997 ç., нарăс, 11). Автор çырнисен хăйне евĕрлĕхĕ вăл — тĕлĕнме, ыррине вĕренме, çынсене юратма пĕлни. Пурте кăсăклантарать ăна: чăваш шăши те, унăн чĕлхипе культури те. Ахальтен мар Н. А. Платонов университетăн Чăваш филологийĕпе культура факультечĕн чи çывăх юлташĕ, чи кĕтнĕ çынни пулса тăчĕ. «Эпĕ хам та ялта ӳснĕ, талантсем пумай унта, пулас паллă тĕнчевçĕсем, писательсем, композиторсем, спортсменсем. Анчах вĕсене вĕрентсе пымасан, çамрăк чухнехи ылтăн вăхăта сая янă пулать, халăх пуласлăхĕ те вĕсенчен килет», — тет вăл пирĕн студентсене.

Акă, вăл тăрăшнипех «Ишлей тăрăхĕнче» хаçат та тухма тытăнчĕ. Питĕ пысăк, пархатарлă ĕç ку! Хăй редактор вĕт!

Сăмах май, Н. А. Платонова Шупашкарти театрсенче те татăшах курма пулать. Спонсор пулса вăл В. Петровăн кулăшпа сатира театрне те, Стас Владимиров юрăçа та, ыттисене те самаях пулăшнă, чăн-чăн чăваш меценачĕ ятне тивĕçнĕ. Вăй патăр эппин сана малашне те, заводăн тĕлĕнтермĕш директорне, çирĕп кирпĕч, савăнăçлă купăс, каратэ тата çивĕч калем ăстине. Çак тăватă кит саншăн малашне те пурнăç тереке выränне пулччăр. Юратнă мăшăрпа икĕ ачăра, тус-юлташусене те сирĕн чăваш аптраманлăхĕ яланах тĕслĕх пулса тăрасса шанас килет.

Валентин АБРАМОВ,
писатель, ЧГУ преподавателĕ, доцент.

«КАНУ КАÇЕ Е СЦЕНА ÇИНЧИ КАЗИНО»

1997 ç., юпа уйăхĕн 7-мĕшĕ

Çак ятпа иртрĕ Ишлейри «Рябинушка» ресторанра кирпеч заводĕнчи пысăк мероприяти. Завод дирекцийĕ тăрăшнипе — çине тăнипе Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕн «Тавсен» программи тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Виктор Петров ертсе пыракан кулăшпа сатира театрĕ кунта тăрăшакансене чăннипех кану йĕркелесе пачĕç. Каçа Шоркка-ри фольклор ушкăнĕн ăстисем те хутшăнчĕç.

«Кану каçĕн» проект авторĕ, телевидени редакторĕ Арсений Тарасов кашнин кăмăлне каймалла хатĕрленĕ. Таша-юра, кулă-савăнăç, тĕрлĕ кулăш çителĕклех пулчĕ. Қалтăрмач-шоура, акă, завод ĕçченĕ Людмила Седова 5 пин тенкĕлех пĕр машина кирпĕчлĕ пулчĕ. Владислав Михайлов «штормовка» куртка хуçи пулса тăчĕ, Константин Пантелеев водитель хăй вăр-вартарах пулнипе малашне икĕ миллион тăракан диван çинче выртса тăрĕ.

Шоркка фольклор ушкăнĕнчи, Ишлей кирпĕч заводĕнчи халăх пултарулăх ăстисем хăйсен пултарулăхĕпе профессиллĕ артистсенчен пĕртте кая маррине çирĕплетрĕç. Ю. Филиппова, В. Евгеньев, М. Иванова, И. Абаткина, Зинаидăпа Вениамин Семеновсем, Людмилăпа Николай Платоновсем тата ыттисем ĕçре кăна мар, юрă-ташăра та питĕ маттур иккен.

Ахалех асапланса ларатăн хам çав каç мĕн курнине вулакан патне çитерес тесе, ăна кашниех çитес вăхăтрах «Тавсен» программăпа кăтартакан телепередачăра курса ĕненме пултарĕ.

Ю. ЛИСТОПАД.

Н. А. Платонов статйисем

ФРАНЦУЗСЕМ — ШОРККАРА

1996 ç., çу уйăхĕн 21-мĕшĕ

Чăнах та, ырă çын е ырă ушкăн çинчен ырă хыпар таçта та çитет: Шорккари фольклор ушкăнĕн концертне курма Çатра Хочехмат шкулне Парижран килнĕ туристсен ушкăне çитрĕ.

Франциран вĕсем Мускава самолетпа вĕçсе çитнĕ, унтан вара автобуспа — Чулхула урлă. Шупашкарта хăна çуртне вырнаçнă хыççăн вăхăта сая ямасăр тӳрех концерта васканнă. Вĕсене çак шкулта вĕренекенсем чечексемпе кĕтсе илчĕç.

Хăнасем классенче, кабинетсенче пулчĕç, кружоксем мĕнле ĕçленине интересленчĕç. Шкулĕнче таса та илемлĕ. Çакă ĕнтĕ шкул директорĕ Н. В. Дмитриева коллектива лайăх ертсе пынăн çинчен калать. Столовăйĕнче шкул ачисем мĕнле апатланнине те кĕрсе курчĕç хăнасем.

Çак вăрăм çула вĕсене М. Пайелен илсе тухнă. Марселен вырăсла лайăх калаçать. Вырăс чĕлхине шкулта вĕреннĕ. Кайран, институт пĕтернĕ хыççăн, Мускавра посольствăра тăлмач пулса 2 çул ĕçленĕ.

Чăваш Республикинче вăл иккĕмĕш хут. Хăй калашă тăрăх, Шупашкарти 59-мĕш номерлĕ шкула спонсор пулăшăвĕ парса тăрать.

Пĕр-пĕринпе паллашнă хыççăн пуçланчĕ вара кĕтнĕ концерт. Пуçланчĕ уяв. Фольклор ушкăнĕн баяннисĕ Михаил Леонидович Леонидов кĕвĕ пуçласан акăш евĕр шуса тухрĕç хăйсен илемлĕ чăваш тумĕпе хорти артистсем. Куç хупмасăр пăхрĕç вĕсене хăнасем. Тыткăна илчĕ вĕсене ĕлĕкхи чăваш юрри.

Зинăна Веня Семеновсем чăвашла шӳтлĕ юрă юрласа пĕтерсен, ура çине тăрсах тăвăллăн алă çупрĕç французсем. Вĕсем те, хамăр та тахçанах пĕр-пĕрне пĕлнĕ пек туйăнса кайрĕ çак самантра.

Унтан вара хăйсен ăсталăхне кăтартма шкул ачисен черет çитрĕ. Вĕсемпе шкул директорĕн çумĕ Лидия Ильинична Шайманова репетицисем ирттерет. Чăн-чăн талантсем ӳсеççĕ çакăнта.

Кун хыççăн ыйтусемпе хуравсен вăхăчĕ пуçланчĕ. Эпир Франци çĕршывĕпе кăсăклантăмăр, вĕсем вара чăваш халăхĕ пирки, ăçтан вĕсем, çакăнта çити мĕнле килни çинчен пĕлесшĕн пулчĕç. Историкĕсем калашă тăрăх, инçетрен, ăшă çĕртен, Тигрпа Ефрат юханшыв патĕнчен килнĕ теесе, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç вĕсем.

Пĕр уйăх ĕçленĕ укçипе вăтам пурăнакан француз Чăваш çĕршывне килсе курма пултарать теесен вара шкула пуçтарăннă халăх тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ.

Сисĕнмесĕрех уйрăлмалли вăхăт çитрĕ. Çакă та палла пулчĕ: французсем те ĕçлеççĕ. Пери — ялхуçалăх офисĕнче, тепри вара Раççей çинчен видеофильм ӳкерет. Хăшпĕрисем çемйипех тухнă çак сула. Пенсие тухнă çынсем те пур вĕсен хушшинче. Нумайăшĕ отпуск вăхăтĕнче курма тухнă анлă Раççее.

Автобус кăшт кайсан, хăнасем темшĕн чарăнчĕç, каялла тула тухрĕç. Çакна курсан çынсем малтан вĕсен техники ваннă пулĕ тесе шутланăччĕ. Çук, анла мар иккен. Вĕсем Шорккари кивĕ çил арман çумне пухăнса видеопленка çине асăнмалăх кадрсем ӳкерме пуçларĕç.

Эпир те вара хăçан та пулин Парижа çитсе, Эйфель башни çине хăпарса çӳлтен пăхса тарасси çинчен ĕмĕтленме пуçларăмăр. Ĕмĕтленни пурнăçланма пултарать те пуль, мĕшĕн тесен пире французсем хăнана чĕнчĕç. Халĕ эпир вĕсем валли Шоркка клуб заведующийĕ В. А. Журавлев ертсе пынине çĕнĕ программа хатĕрлеме репетицисем иртерме пуçларăмăр.

ИШЛЕЙРИ МЕДСЕСТРА

1996 ç., юпа уйăхĕн 26-мĕшĕ.

Ишлейри кирпĕч заводĕнче час-часах тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем иртеççĕ: футбол, каратэ, шахмат тата ытти те. Çапла пĕррехинче кирпĕч çапакан тата кирпеч хĕртсе кăларакан цехсем хушшинчи футбол вăйăн никам та çĕнтереймеллипе вĕçленчĕ. Кĕрешӳре пурте çĕнтерӳшĕн çеç тăрашать. Кам танăнса пырать — шофер-и, пуçлăх-и е урăх рабочи — пĕр-пĕрне уяса тăмаççĕ, мечеке тыртса плесснипен тăрмашаççĕ. Тен вăхăт никам çĕнтереймеллипе вĕçленсен, судья тепĕр тайм вылямалла турĕ. Пĕр самантĕнче, сывлăшри мечĕкшĕн кĕрешнĕ вăхăтра, манăн сусăрланмалла пулчĕ. Çапла вăл пурнăçра, чирленĕ е сипленнĕ вăхăтра çеç эпир шур

халатлă ĕçченсем çинчен аса илетпĕр. Эпĕ те уйрăмлăх мар: тӳрех Ишлей пульницине чупрăм. Кунта тĕп врач пулса ĕçлекен Эвольд Иванович Андреев манăн сусăрланнă вырăна курсан «кун пек сурана В. Г. Федоров е Г. Г. Яковлев хирургсем хăвăрт та лайăх юсаса яраççĕ,— терĕ. Вĕсем сана Анастасия Федоровна медсестра патне сурана çыхса яма çӳретсен эсĕ вара чăнах та телейлĕ çын пулатăн»,— хушса хучĕ вăл юлашкинчен. Владимир Григорьевич тата Георгий Геннадьевич хирургсем мана тĕплĕн пăхрĕç, унтан-кунтан пускаларĕç, рецепт çырнă вăхăтрах: «Ытлах кулянмалли çук, пĕр вунă кун пирĕн пата укола тата сурана сиплеме çӳресен —юсанма пулать,— терĕç. Сана эпир чи пултаруллă медсестра Анастасия Федоровна Максимова патне яратпăр»,— пĕлтерчĕç хирургсем.

Ларатăп вĕсен пӳлĕмĕнче урăх врача пулăшма кайнă медсестрана кĕтсе. Кирпĕч заводĕнче çичĕ çул ĕçлетĕп пулин те, ăна курма тӳр килмен. Çав вăхăтрах операци тăвакан пӳлĕмрен шурă халат тăхăннă тăватă хĕрарăм хавассăн каласа тухрĕç. Эпĕ мана кирлĕ медсестра хăшĕ пулнине тӳрех тавçăрса илтĕм. Кăмăллăн, шур хурăн пек яштака хĕрарăм патне пытăм та «Эсир Анастасия Федоровна мар-и?» — терĕм. Ăшшăн кулакан куçĕсемпе ман çине пăхса пуçне тайрĕ те, эпĕ тепĕр сăмах каличчен мана сурансене çыхмалли пӳлĕме кĕме сĕнчĕ. Çапла вунă кун больницăна çӳренĕ вăхăтра эпĕ Анастасия Федоровна пулăшнине медицина науки çинчен мĕн кăна пĕлмерĕм-ши? Сивĕ çанталăксенче хăвна мĕнле упрамалли çинчен те, шăнса пăсăлсан мĕнле сипленмелли çинчен те — пурне те çырса та кăтартаймăн.

Лăпкă та сăпайлă медсестра хăй çинчен питех каласа парасшăн мар. Çынсем урлă çеç эпĕ ун çинчен кăштах пĕлтĕм. Пĕррехинче Хурамакасси ялĕнче, çĕнĕ çул умĕн шкула каякан икĕ хĕрача, аппăшĕпе йăмăкĕ, ашшĕ-амăшĕ килте пулманнипе, кăмака хутаççĕ. Анчах юшкине иртерех хупса хураççĕ пулмалла. Ирпе киле тавраннă ашшĕпе амăшĕ алăкне вăйпа уçса кĕреççĕ. Анчах та кая юлнă. Пĕр хĕрĕ вĕсен нихăçан та вăранаймасть. Тепĕр хĕрне Ишлей пульницине илсе кайса çăлса хăвараççĕ. Тăна кĕмесĕр ултă уйăх выртать çав хĕр. Нумай вăй хураççĕ унăн пурнăçĕшĕн врачсем. Çак ĕçре Анастасия Федоровнăн тӳпи питĕ пысăк пулнă. Халĕ çамрăк хĕр çӳрет ĕнтĕ.

Çакăн çинчен илтсен, манăн медсестра пирки тата тĕплĕнрех пĕлес килчĕ. Ман телее, вĕсен ялĕнчи пĕр çынпа тĕл пултăм. Анастасия Федоровна Муркаш районĕнчи Уйкас Хачăк ялĕнче, хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕне, тӳрĕ кăмăллă Ф. А. Пушкина колхоз пуçлăхне суйласçĕ. Пĕр вăхăтра вăл Чулхулари автомобильсен заводĕнче те вăй хурать. Амăшĕ, Анфиса Федоровна, колхозрах çĕр ĕçĕпе тăрмашать. Тăватă хĕр, пер ывăл пăхса ӳстереççĕ Пушкинсем. Шкул пĕтернĕ хыççăнах Настя фермăра доярккăра ĕçлет. Каярах Канашри медицина училищине вĕренме каять. Училищĕрен вĕренсе тухсан ентешĕсем ăна тăван яла илсе каяспăн, анчах та çамрăк специалист малтан пуян опыт пухма ĕмĕтленет. 1963 çулхи августăн 1-мĕшĕнче вăл училищĕрен пана направленипе Ишлее килме тухать. Анчах ун чухне шоссе те, автобус та пулман. Вĕсем вара, пĕрле вĕреннĕ хĕр-тусĕпе, çула май каякан грузовикпа Ишлее килсе çитеççĕ.

Çав вăхăтрах тата пĕр качча мотоциклпа çавранса ӳксе урине амантать. Çак качча хитре медсестрана чун-чĕререн юратса пăрахать. Пĕр-пĕрне лайăх пĕлсе çитсен вĕсем машăрланма шухăшласçĕ. Упăшки, Алексей Максимович, трактор тăвакан заводра инженер-конструкторта ĕçлет. Халĕ вĕсен икĕ ывăл ӳсет: пĕри маштехникумра, кĕçĕнни 9-мĕш класра вĕренет. Хисеплет вĕсене ял-йыш. Çĕрле те, уяв кун та канăç çук вĕсен. Пĕри суранне сиплеме, тепри ахаль каласса ларса чупне уçма кĕрет çак тараватлă киле. Пурин валли те вĕсен ăшă сăмах пур.

КУН ПЕККИ ПУЛМАНЧЧЕ

1996 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕ.

Шоркка ялĕнчи фольклор ушкăнĕ икĕ уйăх çĕнĕ программа хатĕрлесе эрнере икĕ хут репетицисем ирттерчĕ. Ăна малтанах Мăнал ялĕнче кăтартмаллаччĕ. Ноябрĕн 16-мĕшĕнче унта кайма хатĕрленсе, клуб заведующийĕ В. А. Журавлев вунă кун малтан автобус пирки районти культура пайне официаллă йĕркепе пĕлтернĕ. Анчах та палартнă кун артистсем кăлăхах хăйсене илме килессе 5 сехет кĕтсе ларнă. Вĕсен виççĕмĕш пайĕнче кăтартмалли чăвашсен ĕлĕкхи туй кăтартăвĕ валли пĕçернĕ икерчĕ, кукаль, чăкăт, çăмарта хăпартни тата сăри те çак кĕтнĕ вăхăтра сивеннĕ. Садике çӳрекен ачасен çеç мар, тивĕçлĕ канури çак концерта хутшăнакан çынсен те кăмăлĕсем пăсăлнă.

Çын хушшипе мар, хăйсен чунĕ ыйтнипе, район халăхне хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарма кĕрхи вăрăм каçсене кĕскетсе, çулла йывăр çĕр ĕçĕнче тертленнĕ халăха йăпантарса пĕр тӳлевсĕр тата ялсене çитме бензина хăйсен укçипе илсе çынсене савăнтарассишĕн тăрăшнăшăн, анчах та яваплă çынсем çакна туйманни, хыта чĕреллĕ пулни тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерче.

Мăнал ялĕнче те халăх клубра пумайччен кĕтсе ларнă. Çак концерта курма юпашар ялсенчен те пылчăк çула пăхмасăр пухăнна.

Шупашкар телевиденийĕнчен те, «Тавсси» каналтан, унăн тĕп режиссерĕ Арсений Тарасов хăйĕн ушкăнĕпе кинопленка çине ӳкерме çитнĕ. Вĕсем те, клубри халăх та çул çинче аварине лекмен-и тесе пăшăрханса ларнă. Çитменнине тата Шорккара телефонĕ те ĕçлемест.

Мăнал клуб директорĕпе унăн çумĕ тата вĕсен юлташĕсем çак хаклă хăнасене кĕтсе илме ырми-канми, çурçĕр ыттиччен клубра юсав ĕçĕсем тунă: сăрланă, шуратнă, сценăна çĕнĕ чаршавсем çакса илемлетнĕ.

Шоркка фольклор ушкăнĕ «Тăван ен» хаçат урлă яваплă çынсем автобус паман пирки çитейменшĕн Мăнала пухăннă çынсенчен тата «Тавсси» каналăн ӳкерме пынă ĕçченĕсенчен каçару ыйтать. Вĕсем çирĕплетсех калаççĕ: хăйсен укçине пухса, ăçтан та пулни автобус тунса, Мăнал халăхне çитес кунсенче шантарнă уява сцена çинче кăтартăç.

Шоркка ялĕ.

КАНДИДАТАН СУЙЛАВ КУНĔ

1996 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕ.

Ир-ирех юлташсемпе Кӳкеçри инвалидсемпе ваттисен интернатĕнче вырнаçнă 917-мĕш номерлĕ суйлав участокне çитсе курас теремĕр. Пире кунта кĕтменни шала кĕрсенех сисĕнчĕ. Комисси членĕсем сиввĕн йышăнса пирĕнпе калаçма кăмăл тумарĕç.

Сасăлав пуçланнă. Паллă ĕнтĕ, кунта пĕччен юлнă ватăсем, тăван ывăлĕ-хĕрĕ пур çĕртех çак çурта лекнĕ хисеплĕ кипемейсемпе мучисем пурăнаççĕ. Нумайăшĕ хăй тĕллĕн çӳреймест, куç вăйĕ хавшанă, хăшĕсем вулама та пĕлмеççĕ. Çавăнпа та вĕсене пĕр карчăк кабинăна çавăтса кĕрет те «суйлама» пулăшать.

Вĕсемпе сывпуллашса районти Культура çуртне концерт пуçланнă тĕле çитрĕмĕр. Кунта уяв сĕмĕ пурри паларать. Артисчĕсем пурте палланăскерсем...

Çула май чылай суйлав участокне кĕрсе тухрăмăр, каç пулнă тĕле Ишеке çитрĕмĕр. Комисси председателĕ такамна **телефонпа** кăшкăрсах калаçать, суйлава питĕ сахал çын хутшăнни çинчен пĕлтерет. Тепĕр вĕçĕнче калаçаканнĕ ăна килтен-киле çӳреме хушать. Пăрлак çулпа никам та ăшă килтен тухасшăн мар: «Санта-Барбара» сериалти тĕп сăнарсемпе, телевизорпа уйрăлас килмест пулас.

Участока килнĕ суйлавçăсенчен пĕри, чи хăюлли те харсăрри, Ишек тăрăхĕнчи пĕтĕм çынсен ячĕпе шухăшне пĕтĕмлетсе çапла каларĕ: «Сирĕн, сакăр кандидатăн, мулаххай ăшĕнчен шăпа туртса кăларса камăн район пуçлăхĕ пулмаллине татса памалла çеç. Халăхăн ку суйлавпа çăварĕ тулса çитнĕ, анчах хырăмĕ пуш-пушах».

Эпир вара «çулçӳреве» пуçланă вырана çитсе курас терĕмĕр. Ваттисен çуртĕнчи комисси членĕсем унченхи пекех питĕ сиввĕн пăхаççĕ. Вĕсемшĕн паянхи суйлав уяв мар, пуша пек туйăнать. 22 сехет хыççăн бюллетеньсене шутлама пуçларĕç. Анчах интернат директорĕ, комисси членĕ мар пулни те, мĕнле шутласан лайăхрах пулассине вĕрентсе ларать.

238 бюллетеньрен виçĕ кандидата пĕр саса та лекменни шутлав вĕçленсен палла пулчĕ. Çак участокра 215 суйлавçă районти тараватлă та хисеплĕ кандидат пуçлăх пултăр тесе хăйсен кăмăлне палартрĕ.

Пирĕн çул малалла — районти тĕп суйлав комиссине. Кунта виçĕ ушкăна пайланса участокри комиссисен председателĕсемпе секретарĕсем хатĕрленĕ протоколсене йышăнаççĕ. Хăшпĕр ял администрацийĕсен пуçлăхĕсем те çак каç ыйхă килмен пирки кунтах каллĕ-маллĕ çӳреççĕ. Пăшăрханаççĕ. Уставпа килĕшӳллĕн, çĕнĕ пуçлăх хайĕн йышăнавĕпе вĕсене ĕçе лартма е ĕçрен хатарма пултарать-çке. Çурçĕр иртни 2 сехет тĕлне пумайăшĕ протокол кăтартăвĕсене компьютер витĕр кăларса килсене саланса пĕтрĕ.

Анчах та комиссин ĕç пĕтерме иртерех-ха. Пĕр участокран ыттне те çитеймеççĕ. Хамăр хушăра калаçса ларатпăр: е Тăрăнран, е Янăшран кая юлса килеççĕ пуль-ха. 3 сехетре куранса кайрĕç кĕтнĕ çынсем. Инçетрисем мар, кунтисемех— кӳкеçсем, 2-мĕш шкулта вырнаçнă участокран иккен вĕсем.

Районти суйлав комиссийĕн пĕлтерĕвне хаçатсенче пичетленĕ ĕнтĕ. Списоксене кĕртнĕ 39726 суйлавçăран 17129-ше бюллетеньсене урăна янă. Р. В. Даниловпа Н. О. Осипов иккĕмĕш тура тухрĕç. В. С. Давыдовăн Николай Осипович-ран 37 саçă сахалтарах пулчĕ.

Чăнах та, пĕлме çук хăваи шăпуна: пĕр çĕрте тупатăп, тепĕр çĕрте çухататăп. Хамăн кĕске çул-сыравне вĕçленĕ май, мана çак суйлавра пулăшса пынă ырă çынсене тата районти сумлă та хисеплĕ 8 кандидат хушшинче манăн хушамата шыраса тупса хăйсен сассисене панисене пурне те тав тăватăп, ырлăх-сывлăх сунатăп.

ÇУЛĔ ТАКĂР ПУЛТАРЧЧĔ

1996 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕ.

Иртнĕ канмалли кунсенче Олимп резервĕсем хатĕрлекен Шупашкарти ятарлă керменĕнче каратэ кĕрешӳ мелĕпе ăмăртакансен ассоциацийĕ (ертӳçи С. В. Фомиряков) республикăн уçă чемпионатне ирттерчĕ.

Турнирта 8 çулхи шкул ачисенчен пуçласа 17 çулхи яшсемпе хĕрсем те ăмăртрĕç. Пĕрремĕш вырăна çĕнсе илнисем хушшинче Лапсарти вăтам шкулта, 10-мĕш класра вĕренекен С. Якимова (тренерĕ В. Астраханцев). Куславккаран килнĕ А. Морскова тата Чăваш патшалăх университетĕн студенткине Э. Гармаша палăртмалла. Вĕсем пысăк ăсталăхпа ăмăртрĕç. 17 çулхи Элеонора иртнĕ чемпионатра аллине хуçнă пулин те кĕрешĕве вĕçне çитерсе чемпионка ятне çĕнсе илнĕччĕ. Халĕ те вăл хастар ăмăртрĕ.

Пирĕн ентешсем — Ишлейри спорт шкулĕнче ăсталăх пухакан 17 çулхи Димăна Василий Фомиряковсем (ашшĕсем пĕр тăван) финала тухса пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç. Иртнĕ çул Василий чемпион ятне тивĕçнĕ пулсан, кăçал Дима вăйлăраххи палăрчĕ. Аслă шкула вĕренме кĕме хатĕрленекен çамрăксем спортпа питĕ туслă. Каникул вăхăтне те вĕсем йытă хăваласа ирттермеççĕ. Çуллахи каникулта Ишлейри кирпĕч заводĕнче вăй хучĕç. Кунсăр пуçне «Волчонок» спортклубра шкул ачисене кĕрешӳ ăсталăхне туптама пулăшаççĕ.

Командăсем хушшинчи ăмăртура ишлейсем мала тухрĕç. Анчах та çак çитĕнĕве тума вĕсене çăмăл мар. Ишлейри спортклубра ăшă çук пирки халĕ вĕсем тренировкăсене кашни кун Шупашкара çӳреççĕ. Анчах та çакăншăн яваплă çынсем çак çитменлĕхсене пĕтерсе пултаруллă кĕрешӳçĕсене малашне те ăнăçлă ăмăртса Раççей, тĕнче шайĕнчи турнирсенчен çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçсе тавраннма пулăшасса шанас килет.

ТАЛАНТ

1996 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕ.

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕпе В. А. Петровпа унăн пӳлĕмĕнче реклама мĕнле тусан аванрах пулни çинчен калаçса лараттăмăр. Çав вăхăтра «Хыпар» хаçата илсе кĕрсе унăн сĕтелĕ çине хурса хавассăн пĕлтерчĕç: «Сирĕн ĕçе хакласа мухтавлă материал тухнă».

Кашниех сăнӳкерчĕкпе, хăй çинчен çырнă статьяна тимлĕн те темиçе хут вуласа тухмасăр чăтаймасть. Анчах Виктор Аркадьевич çак хаçата сирсе хурса ун çинчен пачах манса та кайрĕ. Унччен эпĕ ăна Шорккари фольклор ушкăнĕн икĕ сехет çурăна пынă концертĕнче ӳкернĕ видеофильма пăхса тухма панначчĕ. Ушкăнри нумай артист пултарулăхне пысăка хурса хакларĕ. Икĕ-виçĕ номерне хăйĕн шоу-программинче усă курма палăртни çинчен пĕлтерчĕ тата çав артистсене çитес вăхăтрах сцена çине кăларас пирки ыйтса тĕпчеме пуçларĕ. Çакă икĕ тĕслĕх мана тĕлĕнтерчĕ те, сĕтел хушшине ларса хам пĕлнине, курнине В. А. Петров çинчен çырма хистерĕ.

Малтанах ăна, Йĕпреç каччине, Шупашкара килсе ĕçе вырнаçма, йăва çавăрма çăмăл пулман. Халĕ те пыл та çу теме çук. Магазинсенче «Калтăрмач-шоу» валли призсем, парнесем шыранине çынсем пĕрре çеç курман. Хушăран çав тулли кутамккасене хăйĕнех кирлĕ çĕре вăхăтра çитерме тивнĕ. Укçалла спонсорсем пулмасан, нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ, ниепле шоу та, билетсем сутса çеç тупăш тунипе, пулмасть. Çавăнпа вĕсене шыраса тупса передачăна хутшăнма ӳкĕте кĕртмелле.

Инçетри пасарсенче те курма пулать ăна. Çук-çук, тавар сем сутса таса тупăш илес шухăшпа мар. Пачах урăх туйăмсем туртаççĕ ăна халăх хушшине. Паянхи пурнăçа сцена çинче кăтартма çĕнĕ витĕмлĕ сăмахсем, пулнă-иртнĕ саманта шырать вăл. Пирĕн районта та çитмен ял сахал вĕсен.

Нумай пулмасть Кӳкеҫри ҫамрӑксен центрӗнче «Ҫӑлкуҫра» спектакльне пулчӗҫ вӗсем. Кулӑш кӑтартрӗҫ.

Отпуск вӑхӑтӗнче е ӗҫ хыҫҫӑн, ҫуллахи кунсенче час-часах курма пулать ӑна хӑйӗн юлташӗсене ҫурт-йӗр туна вӑхӑтра ӗҫлесе пулӑшнине. Платник та вӑл, бетонщик та. Пӗлмен ӗҫ çук пулӗ. Тусӗсем вара чылай. Анчах вӗсен хушшинче суеҫӗ, е ултавҫӑ çук. Пурте таса чунпа тӑрӑшса ӗҫлекен çынсем çеҫ. Уйрӑмах Арсений Тарасов тележурналиста ырӑпа асӑнать. Пӗр-пӗрне йывӑр вӑхӑтсенче сӑмахпа çеҫ мар, ӗҫпе те нумай пулӑшса тӑнӑ.

Ватӑ çынсем калана тӑрӑх, ун пек çын чӑваша пулман. Çавӑнпа пултарулла ҫамрӑксене пирӗн пурин те пулӑшмалла, вӗсемпе пирӗн мухтанмалла.

Кам вӑл Виктор Петров. Артист, кулӑш ӑстин, каскадер, каменщик, шоумен? Пӗр сӑмахпа — талант.

КАРАТИСТЫ ЧУВАШИИ — ЛУЧШИЕ В РОССИИ

1997 г., январь, 24

10—11 января в Доме творчества молодежи прошел II открытый чемпионат России по каратэ среди школьников. На этот престижный турнир приехали юные спортсмены со всех уголков огромной России от Санкт-Петербурга и Ямало-Ненецкого национального округа до Перми и Новосибирска. Приехали гости и из ближнего зарубежья — с Украины. Всего — более 350 лучших спортсменов из 28 регионов Российской Федерации.

Чемпионат проходил под эгидой Чувашской Ассоциации восточных единоборств. Наши молодые каратисты завоевали I место. Золотых медалей удостоились Дима Фомиряков из Ишлей (тренер Андрей Фомиряков), Женя Павлов — ученик 11 класса школы № 31 (тренер Геннадий Спиридонов), Сергей Якимов из Лапсар (тренер Вениамин Астраханцев).

В командном первенстве по ката, где каратист демонстрирует приемы защиты и атаки без противника также наши ребята заняли первое место. В этой программе соревнований отличились воспитанники Чувашской национальной лиги традиционного каратэ Егор Жирнов, Сергей Якушев, Женя Данилкин — все учащиеся из г. Чебоксары.

Наши школьницы из Козловки так же в командном ката стали чемпионами России. Они выступили в следующем составе: это сестры Аревина и Мария Морсковы, Катя Моисеева. Их готовил к турниру тренер Николай Челдриков.

Лучших результатов в индивидуальном кумитэ в своих возрастных категориях добились Дима Фомиряков, Михаил Вазников (школа № 2 г. Чебоксары), Володя Гущин из Козловки. У них бронзовые награды.

За лучшую технику и волю к победе специальным призом от Ишлейского кирпичного завода награжден Дима Фомиряков.

Вся сборная Чувашии в течение месяца тренировалась под руководством Вячеслава Тимофеева в Доме спорта «Спартак».

Следует отметить, что во время турнира, к счастью, никаких серьезных травм не было. Нет ни выбитых зубов, ни поломанных рук, ног или разбитых носов. Но, к слову, во время соревнований один спортсмен упал в обморок. Причина — нехватка кислорода. Зал слишком мал для проведения таких ответственных и престижных соревнований, как чемпионат России. В будущем организаторам подобного рода соревнований следует учесть этот факт.

Оргкомитет по проведению соревнований благодарит за оказанную помощь спонсоров: Чебоксарский завод стройматериалов, Текстильмаш, Ишлейский кирпичный завод, кафе «Палестина» и другие организации.

ӖҪЧЕН ҪЕМЬЕ

1997 ҫ., нарӑс

Мӗн хистерӗ-ха мана алла авторучка тытма. Хастарлӑхпа, вӑр-варлӑхпа, заводра ӗҫлекенсене ырӑ тӗслӗх кӑтартакан Ефимовсен ҫемйи пирки каласа парас килни канӑҫ паманнине çыратӑп редакцие. Ӗлӗкрен ваттисем ҫапла калана: — «Пӳрт тӑррине пахсан арҫын мӗнлине, алкум умне çитсен хӗрарам мӗнлине пӗлӗн». Ефимовсен пӳрчӗ кирпӗч заводӗнчен цех те мар, юмахри кермен пек куранса ларать. Шала кӗрсен шӗкӗр хулари пек сухалса кайса каялла тухма та пӗлмӗн. Зал, çывӑрмалли пӳлӗмсем, кухня, веранда. Кил хуҫи — Иван Петрович Ефимов. Хайӗн ӑста аллисемпе тата ашшӗ, Петр Семенович вӗрентсе, пулӑшса пынипе ҫӗкленсе ларнӑ ҫак çурт.

-50014-
Чебоксарская районная ЦБС Окиск

Иван Петрович кирпĕч заводĕнче 1972 çулхи çурла уйăхĕнче рабочи пулса ĕçлеме пуçланă. Салтакран килсен çăмăл ĕç шыраса çӳремен, заводах тавраннă. Чăваш телевиденийĕпе кăтартакан нумай сериллĕ фильмри пекех çемье традицине малалла тăсать. Кирпĕч заводĕнче ĕçлекенсем Иван Петровичран тĕслĕх илеççĕ. Пĕлмен, туман ĕçĕ çук. Паян кун водительте тăрăшать. Тăм турттарать. Çуллахи вăхăтра, кирпĕч çапнă чух, çамки çинчи тарне шăлса илме те вăхăчĕ çук. Рабочисене тăмпа вăхăтра тивĕçтермесен конвейер та, кирпĕч çапакан машина та чарăнса ларма пултараççĕ. Çавăнпа та унăн ĕçри тĕп тĕллевĕ — хăйне шанса пана транспорта юсавлă тытасси.

Ашшĕпе амăшĕ

те Ефимовсен кирпĕч заводĕнчех ĕмĕрне ирттернĕ. Ашшĕ, Петр Семенович, 36 çул Шупашкарти универбазăра грузчикре ĕçленĕ. Шел, тивĕçлĕ канăва тухсан нумаях пурăнайман ăста çын, утмăл пĕрререх çĕре кĕнĕ. Пĕрре кинĕпе, Алина Германовнăпа калаçса кайрăмăр.

— Сухан кăçал пуç çавăрмасăрах шурса кайрĕ, — тетĕп.

— Сире аттесен суханне кайса кăтартасчĕ: сип-симĕс лараттăм. Тем сапса çаван пек ӳстерме пĕлет вăл, — тет хĕрарăм.

Петр Семенович машăрĕ, Ксения Филипповна малтанах Ишлейре, райпори буфетра, столовăйĕнче ĕçленĕ. Каярахпа Ишлейри кирпĕч заводне куçса 23 çула яхăн тăрăшнă, кунтанпах тивĕçлĕ канăва кайнă. Пурĕ Чăвашпотребсоюз системинче 35 çул кану мĕнне пĕлмесĕр тăрăшнă хĕрарăм. Ун пирки те лайăхпа кăна аса илес килет. Пахчаçимĕç ăсти, кукăль-çăмахĕ те ун аллинче уйрăмах тутлă пиçет.

Машăрĕ, Алина Германовна,

хупямăшне мухтаса пĕтереймест. «Ишлей тăрăхĕнче ун пекки не шыраса тупаймăр, питĕ правур. Хăй ватă пулин те мĕн вăй çитнĕ таран пире пулăшма тăрăшать»,— тет. Алина Германовна хăй Красноармейски районĕнчи Именкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1974 çулта, Шупашкарта бухгалтера вĕренсе тухнăскер, Ишлейри райпона ĕç шыраса пырать. Кирпĕч завочĕн ун чухнехи директорĕ П. Капитонов ăна шăпах кунта курать те завода ĕçлеме чĕнет. Уркенмен хĕрарăм кассирта ĕçлеме тытăнать. Темле йывăр чухне те питĕнчен йăл кулă çухалмасть.

Бухгалтерине кĕнĕ çерте çĕвĕ цехĕнче çĕленĕ япаласем çакăнса тăраççĕ. Алина Германовна вĕсене кирпĕч туянма килекенсене сĕнет, суйласа илме пулăшать. Кирек хăçан та çынна пулăшма хатĕр пăрчăкан пек хĕрарăма заводра пурте хисеплеççĕ тесен пĕрре те йăнăшмастăн пулĕ.

Ачисем

Машăрĕпе, Иван Петровичпа виçĕ ача пăхса çитĕнтерет Алина Германовна. Аслă хĕрĕ Таня Шупашкарти коопераци техникумне пĕтернĕ хыççăн таçта аякка каяс темерĕ, пирĕн пата, Ишлейри кирпĕч заводне ĕçе вырнаçрĕ. Амăш пекех пултарулла та ăста. Çынна пĕр сăмахранах, куçран пăхсах ăнланать. Кирпĕч туянакансене кирлĕ документсене хăвăрт та типтерлĕ туса парать. Ăна малашне пысăк пĕлӳ илме тата телей, юрату сунас килет. Ефимовсен вăталăх ывăлĕ Володя 11 класра вĕренет. Çуллахи каникул вăхăтĕнче кирпĕч заводĕнче вăй хурать. Пушă вăхăта та сая ямасть. Заводра ирттерекен мероприятисене хастар хутшăнать. Ăста футболист.

Кĕçĕн хĕрĕ Ирина тăваттăмĕш класра пĕлӳ пухать. Чĕкеç чĕлхиллĕ, çивĕч хĕрача. Ăна час-часах бухгалтерине курма пулать. Аппăшне хут çырма, карандаш шĕвĕртме пулăшать. Çапла пĕчĕккĕн вăл та ĕçе явăçать.

Строительсен кунĕ ячĕпе, дирекци, завод профкомĕ йышăннипе потребкоопераци тытăмĕнче 125 çул ĕçлекен Ефимовсен çемйине кухня гарнитури парса чысларăмăр. Малашне те мăн вĕсене коллектив ячĕпе ăнсăлми телей, çирĕп сывлăх, вăрăм кунçул сунас камăлăм пур.

ЕЛЧĔК ТАРАХĔНЧЕ

1997 ç., нарăс уйăхĕн 11-мĕшĕ

Пирен районта пурăнакансен ытти районсенче пурнăç еплерех иртсе пыни çинчен пĕлес килет пулĕ тетĕп. Çавăнпа хам мĕн курни-илтнине хаклă вулакансем патне çитерес терĕм. Пурнăçĕ те, тумĕ те, йăли-йĕрки те, калаçăвĕ те пирĕн районтинчен самай урăхларах унта. Тĕслĕхрен, çĕр улмине вĕсем «кантук», пӳрт çине витмелли хĕç-тимĕре «калай», пусмана «чикмек» теççĕ. Тата нумай сăмах пĕлтерĕшне пире малтанах ăнланма йывăр. Эпир ытларах «о» çине таянса ка-

лаçатпăр пулсан, вĕсем вара литература чĕлхипе, тасарах калаçаççĕ.

Хăнасене тарават кĕтсе илме пĕлеççĕ. 19 çул Елчĕк тăрахне кайса çӳретĕп пулсан та, пĕр кӳренмелли сăмах та илтсе курман, кӳршĕ-тăвансемпе харкашинне те ишăçан та илтмен. Эрех ĕçсе урам тăрăх кашкăрса, кăкăр çапса кампа та пулин тытăçса хăйсен вăйне катартин пулман. Çапах та вăйлă сын кунта хисепре. Кашни çул колхозна район ака туйĕнче кĕрешсе «паттăр» ятне çĕнсе илнĕ сынна така е вăкăр парнелеççĕ. Çавăнпа та пуль, Елчĕкре çуралнă каччăсем Чăваш е Раççей чемпионачĕсенче малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Уявсем ирттерме те пĕлеççĕ кунта. Çĕнĕ çул каçĕнче Патреккел клубĕнче вырăнти ансамбль икĕ сехетлĕх концерт, унтан юрăпа ташă конкурсĕсем ирттерчĕç. Сцена çине хăнарса хăйсен аслăлăхне катартнă кашни артистах асăнмалăх парне пачĕç. Ун хыççăн лотерея выляттарчĕç. Кама пĕр машина çĕр кăмрăкĕ е пĕр лав утă тухрĕ. Автан, пăру, шампански эрех тата ытти те пур вылявра. Уяв программине хатĕрлекенĕ — Г. А. Борисов, Раççей Федерацийĕн Культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Çĕнĕ çул çитесси вун пилĕк минут юлсан вара клубран пурте киле васкаççĕ. Кунти йăлапа пĕтĕм çемьепе уява килте кĕтсе илмелле. Темиçе çемье пуçтарăнса пĕр çул пĕрин патĕнче, тепĕр çул тепĕр килте çĕнĕ çула кĕтсе илме малтанах палăртса хăвараççĕ. Çур çĕр иртнин вăтăр минутран клуба уçаççĕ, вара вăйă-кулă пуçланех пырать.

Уявсене интĕ интереслĕ ирттернĕ пирки елчĕксем те çак яла пыраççĕ. Çулĕ те ниçе мар — виçĕ километр çеç.

Уяв куçĕ пĕр-пĕрин патне хăнана çӳреççĕ. Ташламалăх, савăнмалăх килĕсенче вырăн пур. Вăтам пурăнакан пӳрт çĕр тăваткал метр калăпăш пулать. Нумайăшĕн пӳрчĕсем икĕ хутлă е мансардăпа. Урам хушшипе асфальт, шывĕ кашни кил умĕпех. Выльăх-чĕрлĕх нумай усраççĕ. Пире те уявсем пĕтсен машăран пиччĕшĕ сысна чикме илсе кайрĕ. Харăссăнах икĕ сысна ураран ӳкерсе ятарласа тунă хатĕр çине çакса хутăмăр. Çакса хумалли япалине виçĕ пăрăхран (диаметрĕ 20 мм) хатĕрленĕ. Вĕçне шуса ан кайтăр тесе, кивĕ сӳре шăлĕсене сваркăпа çыпăçтарнă. Питĕ меллĕ япала, кун пекки эпĕ ниçта та курманччĕ.

Сыснине чи малтан витерех, хыçалти пĕр уринчен вĕренне сыхса кил картине илсе тухса, тепĕр çынни малти уринчен çĕклесе çĕр çине вырнаçтараççĕ. Пирĕн патăрта нумайăшĕ чĕрепе чикеççĕ пулсан, кунта пырне касса яраççĕ, вара вилекен сысна кăшкăрса чуна ыраттармасть. Юнне те илмеççĕ, аш-какай нумай пирки пулĕ терĕм. Сĕтел çинче шăрттанĕ те, рулечĕ те, кăвакалпа хур какайĕ те чылай. Ялта кашни кил 3—5 сысна, ĕне, вăкăр, 50-шар хур е кăвакал тытма тăрăшать. Арсентий Скворцов, сăмахран, иртнĕ çул 11 сысна усраса çăмăл автомашинăллă пулнă. Ĕçлемесĕр нимĕн те пулмашинне кунти таврара лайăх анланаççĕ.

Йывăр пулин те «Прогресри» фермăсенче ĕне шутне чакарман. Пурĕ 350 ĕне. Кунне кашни ĕперен 14 литр сĕт саваççĕ. Çак шута вăхăтлăха пăрулас умĕн сума пăрахтарнă енесене те кĕртеççĕ.

Кӳршĕ В. Петров хăйĕн пӳхрепне анса пăхма сĕнчĕ. Чăтаймарăм, килĕшрĕм. Гараж айĕнче ятарласа 3 метр таранăн чавнă, кирпĕчпе купаласа улăхтарнă, икĕ пӳлĕмлĕ, электричество çути кĕртнĕ пӳхреп, сăнаса тăма термометр та пур. Пер пӳлĕмĕнче компот, варени, тăварлана купăста, хăяр... тепринче, хăмаран тунă сентре çинче — пĕр тонпăна яхăн панулли упранать. «Сутма мар, хамăра çиме», — лапкăн хуравларĕ манăн тус. Çĕр улмипе кишĕр валли урăх нӳхрепсем пурри çинчен пĕлтерчĕ вăл юлашкинчен.

Ахальтен мар ĕнтĕ çак яла çурла уйăхĕнче Шорккари фольклор ушкăнĕпе концертпа килсен, пĕр хисеплĕ хĕрарăм манăн машăртан «Кулянмастăн-и Шупашкар районне кайча тухнишĕн?», — тесе ыйтрĕ. Эпир унта спектакль лартса вĕсене савăнтарса хăварнăччĕ. Вĕсем те пирĕн умра парăмра юласшăн мар, пирĕн пата икĕ автобуспа концерт лартма килеснĕн. Анчах шиклепетпĕр. Клубĕ те пирĕн пĕчĕкрех вĕсене чуна уçса ташлама-юрлама...

КУКЕÇРИ ТУХТĂРСЕМ

1978 çулхи пуш уйăхĕн 20 мĕшĕ.

Çак статьяна çырма лариччен нумай вăхăт шутласа çӳрерĕм. Кирлĕ те интереслĕ материал пулса тухĕ-ши тесе шиклентем. Анчах çаканта ĕçлекен медсестрасем мана хутран-ситрен çыркаланине пĕлсен, хăйсем çинчен çырма ирĕк пачĕç. Эпĕ çеç мар, районта пурăнакансем те районти тĕп больницăра ырă та сăпайлă çынсем ĕçлени çинчен лайăх пĕлеççĕ.

Юлашки вăхăтра хама япăхрах туйма пуçларăм. Çав сăлтавпах Ишлей участок больницинче тăрăшакан Е. С. Матвеева врач патĕнче пултăм. Вăл мана тимлĕн итлесе хыççăн Кӳкеçе Р. И. Константинова тухтăр патне кайма хушрĕ. Юлашкинчен çапла хуравларĕ: «Римма Ивановна 20 çул пĕр вырăнта ĕçлет. Нумаях та вăхăт иртмĕ, эсĕ сывалса та тухăн»,— терĕ. Кӳкеçе çитсен ытти шурă халатлă çынсенчен Римма Ивановнăна мĕнле уйăрса илмелли пирки ыйтсан, вĕсем мана французсен паллă юрăçине Мирей Матьене пĕлетĕр пулсан, ăна паллама та йывăрах мар терĕç. Чăнах та мана хирĕçех тухнă Римма Ивановна эпĕ çакăн хыççăн тӳрех палласа илтĕм. Эпĕ ăна малтанах пĕлнĕ иккен. Икĕ çул каялла манăн анне йывăр чирлесе ӳксен васкавлă пулăшу машинипе больницăна леçнĕччĕ. Виçĕ кун тăна кĕмесĕр выртрĕ вăл. Çав-çавах Римма Ивановна тăрăшнипе лайăх эмелсемпе сипленĕ май, вăй илчĕ пирĕн анне.

Р. И. Константинова Муркаш районĕнчи Вăрманкас Сорăм ялĕнче çуралса ӳснĕ, вăтам пĕлӳ илсен Шупашкарти университетран врача вĕренсе тухсан Кӳкеçе ĕçлеме яраççĕ ăна. Паян кун та çакăнтах вăй хурать. Мăшăрĕпе, Валерий Геннадьевичпа, икĕ ывăл ӳстереççĕ. Кил хуçи те çак больницăрах травматолог пулса ĕçлет. Юман пек çирĕп арçын.

Пĕррехинче вăл ĕçленипе сăнаса лартăм. Пĕр аллипе сусăрланнă вырăна тыткаласа-пускаласа пăхать, теприпе рентген ӳкерчĕкне тишкерет те çав вăхăтрах медсестрана рецепт çырма эмел ячĕсене каласа парать.

— Эсир виçĕ ĕç тума ĕлкĕретĕр-çке,— терĕм тĕлĕнсе.

— Хушăран пирĕн ĕçре Кутузов та пулма тивет. Тӳрех тăватă фронтпа ĕçлемелле, хăвах куран: коридорта туллиех халăх.— Чăнах та травматолог патне салтака каймалли яшсем те, ура-алă мăкăлтанă е хуçнă çынсем те, сусăрланнă çынсен тăванĕсем тата сывалса тухнисем те (тав сăмахĕ калас шутпа ĕнтĕ) çак пӳлĕм алăкĕ патĕнче черетре тăраççĕ.

Вăхăчĕ сахал пулин те, Константиновсем Вăрманкас Сорăм ялне. Вера Петровнапа 78 çулхи Иван Константиновича курма час-часах çӳреççĕ. Иван Константинович вăрçăра танкист пулнă, медальсемпе орденсене тивĕçнĕ. Вăрçăра çĕнтерсе килсен тивĕçлĕ канăва тухиччен колхозра шофер пулса ĕçленĕ.

Икĕ врач юрă-ташă, спектакль курма е хăйсем те хутшăнма юратаççĕ. Çавăнпа вĕсем театра кайса сцена çинче паллă артистсене курма вăхăт тупаççĕ.

Римма Ивановнăпа пĕрлех кунта Ю. Ф. Юпусова терапевт тăрăшать. Иккĕшĕ те пĕр курсрах вĕреннĕ тата пĕр вăхăтрах ĕçлеме пуçланă. Юлия Федоровна эмелсемпе çеç мар, хăйĕн илĕртӳллĕ куллипе те сиплеме пултарать. Иккĕмĕш терапи уйрăмĕнче Вăрмар районĕнче çуралнă хĕрсем В. Шеина тата Н. Скворцова медсестра пулса ĕçлеççĕ. Ырă чунлă та сăпайлă пулăпаран кунта сипленекенсем вĕсене хисеплеççĕ. Чирлĕ çынна ура çине тăратас тесе вăй-хала шеллемесĕр тăрăшаççĕ кунта пурте. Физиотерапи уйрăмĕн пуçлăхĕ А. А. Доронин патĕнче массаж, сиплекен гимнастика тата ытти енĕпе те сывлăха çирĕплетме пулать.

Кашни больницăрах тухтăрсемпе сестрасене санитаркăсем пулăшса пыраççĕ. Вĕсем йывăр та куçа курăнман ĕçсене пурнăçлаççĕ. Кунта та вĕсенчен пĕри — З. В. Виноградова — (Хурăн Чăкăр) 18 çул тăрмашать пĕр вырăнта. Кĕçех тивĕçлĕ канăва тухма та вăхăт çитет унăн. Хурапа шурăна пумай курнă вăл.

Тепĕр санитарки — Шорчекассинче çуралса ӳснĕ Л. Ирбитская. Унăн та хăйĕн шăпи. 8 çул «Паха тĕрĕ» производство пĕрлешĕвĕнче вăй хунă хыççăн больницăна ĕçлеме куçать. Виçĕ ывăл пăхса ӳстереççĕ вĕсем мăшăрĕпе.

Юлашкинчен эпĕ çакна каласшăн. Кунта вăй хуракансен те пурнăçĕ çăмăл мар. Кашнин хăйĕн шăпи. Тепĕр чух вĕсене итлесе ларатăн та чĕре ыратса каять. Анла пулин те, хăйсен йывăр пурнăçне пăхмасăр чирлĕ çынна сыватма вăй тупаççĕ вĕсем.

ПИРĔН ÇЕМЬЕ ТУСĔ

Июлĕн 26, 97 ç.

Район хаçатне, «Тăван ене», 65 çулхи юбилей ячĕпе аша сăмах каличчен унта тăрăшакансене чăн малтан, пурне те саламлатăп. Шкула çӳреме пуçличченех, аслисем кĕтӳ кертсен, килти ĕçсене пуçтарсан, кӳршĕсемпе урама пуçтарăнса райхаçата вуланине паянхи пекех астăватăп. Районти çĕнĕ хыпарсемпе, калавсемпе тĕплĕн паллашаттăмăр, ял хуçалăх предприятийĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса кам мĕн чухлĕ сĕт, аш-какай, чăх çăмарти туса, тырпул пуçтарса илнине тимлĕ тишкереттĕмĕр. Пирĕн хаçат пахалăхĕпе те (те хамăр çак

районта çуралнă тата пурăннă пирки-ши) ытти райхаçатсенчен пĕртте кайра пек туйăнмасть.

Хальхи вăхăтра «Таванъенре» ĕçлекенсем пурте ыра кăмăллă, тараватлă, пултарулла çынсем. Вĕсем районта пурăнакансене çĕнĕ хаçатпа савăнтарма тăрашаççĕ. Камсем-ха вĕсем? Ю. Степанов тĕп редактор (Шупашкар хули), В. Савинкин яваплă секретарь (Шупашкар хули), ял хуçалăх пайĕн заведующийĕ Л. Белов (Ишлей), çырусен пайĕн заведующийĕ П. Павлов (Шупашкар хули), В. Петров, общество́лла пурнăç пайĕн заведующийĕ, выранти радиовещани редакторĕ (Чĕркаш ялĕ), Г. Семенов фотокорреспондент (Кӳкеç), Н. Миронов аслӑ корреспондент (Чулкасси ялĕ), В. Иванова корреспондент (Пранькка ялĕ), Т. Федорова бухгалтер (Шупашкар хули), Г. Львова корректор (Кӳкеç), М. Егорова секретарь-машинистка (Кӳкеç). Вĕсенчен эпĕ те хаçата çырма хăнăхса пыратăп, ман материалсем те тăван хаçатра вырӑн тупаççĕ. Хамăн çеç мар, юратна машăрăмпа хĕрĕм те час-часах хăйсен шухăш-кăмăлне, курни-илтнине хаçат урлă пĕлтереççĕ.

«Тăван ен» — пирĕн çемье тусĕ. Пире вăл ăс та парать, пурăнма та вĕрентет. Çавăнпа та эпĕ Шоркка ялĕн çыннисен, Ишлейри кирпĕч завочĕн коллективĕ ячĕпе «Тăван ен» хаçата вăхăтра тухса тăрса районти кашни кила çитме, пĕтĕм вулаканшăн çывăх юлташ пулма ăнăçу сунасшăн.

ИШЛЕЙРЕ — ГАЗ

Августăн 5, 97 ç.

Çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче патшалăх комиссийĕ Ишлейре вăтам пусăмлă (285 метр) тата пĕчĕк пусăмлă (2900 метр) газ пăрахне йышăнчĕ. Газа пĕрремĕш хут çутма район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. В. Данилов тата Ишлей ял администрацийĕн пуçлăхĕ Л. М. Федоров тивĕç пулчĕç. Чăн та, Ишлес «кăвак çулăм» кĕртес ĕçре вĕсен тӳпи нитĕ пысăк. Тăрашни сая каймарĕ. Халăх та вĕсене савăнăçлă куççуль витĕрех тав сăмахĕ каларĕ.

1979 çултанпа çутçанталăк газĕпе Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕн котельнайне çеç ăшăтнă пулсан, халĕ вара кашни килте «кăвак çулăм» пулĕ.

Газ пăрахне хывакан тĕп подрядчик — «Агростройгаз» фирма. Унăн директорĕ А. С. Гусаров каланӑ тăрăх, выранти халăх субботникĕсене тухса ĕçлемен тата Ишлейре вырӑнаçнӑ организацисем пулăшман пулсан, газ хăçан пуласси паллӑ та марччĕ. Газ кĕртес ĕçре Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕ (директорĕ П. И. Караев), «Ишлейский» ялхуçалăх предприятийĕ (А. Г. Таллеров), «Унга» совхоз (Ю. М. Иванов) тата Ишлейри кирпĕч завочĕ чылай тăрăшрĕç. Çарта нумай пĕлекен, верентекен, тăрăшакан, ĕçлекен вăл — старшина. Суворов каланӑ тăрăх, вĕсем çар тĕрекĕ пулса тăраççĕ. Ишлейре газ кĕртнĕ чухне общество́лла майпа ĕçленĕ çаван пек «старшина» — Валерий Иосифович Семенов. Ун пек çынсем нумайрах пулсан, кĕске вăхăтрах кашни килтех тахçанах ĕмĕтленнĕ газ çути ялкăшмалла.

ĔНЕРХИПЕ ПАЯНХИ — ÇĔРПЕ ПĔЛĔТ ПЕКЕХ

Ноябрĕн 11, 97 ç.

Нумаях пулмасть-ха Кӳкеçри культура çуртĕнче район хаçачĕ тухма пуçланаранпа 65 çул тултарнине паллӑ турăмăр. Редколлеги хатĕрленĕ программа пурне те нитĕ кăмăла кайрĕ, ĕмĕр асăнмалăх хăйнеевĕр парне пулчĕ.

Малтан Ю. П. Степанов тĕп редактор сумлă та ăнланмалла кĕске доклад туса пачĕ. Юрий Петрович пĕтĕм редакторсене аса илсе вĕсене ырларĕ, вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çĕре хӳтĕленĕ çыравçăсене палăртрĕ. Малалла пĕрле мĕнле ĕçлемелли çинчен каласа хăварчĕ. Хаçат ĕçченĕсене, ялкорсене Хисеп грамотисем парса чыс турĕ. Кĕреке хуçи В. М. Савинкин, вăлах тĕп редакторăн çумĕ, пухăва кирлĕ вăхăтра шӳтлесе, хăнасене хисеплесе ертсе пычĕ. Кашни 10—15 минутра юра-кĕвĕ тăхтавĕ путтерчĕ. Артистсем савăнăçлă пухăва килнĕ çынсене юра-ташă «парнелерĕç».

Паян вара, хисеплĕ вулаканăм, эсир 8000-мĕш номерлĕ «Тăван ен» хаçата алла илетĕр. Эпĕ вара хаçатăн пĕрремĕш номерĕне киленсе ларатăп. Ăна пире, Ишлейри кирпĕч завочĕн ĕçченĕсене, шăп та лăп райхаçат 65 çул тултарнă ятпа парнеленĕччĕ. Вулатăп та тĕлĕнетĕп: урăх çĕршывра кăларнă хаçат пек туйăнать вăл. Ун чух хăшпĕр саспаллисем те урăхларах иккен, хăшпĕр сăмахсене пачах ăнланмалла мар тата. Хальхи колхоз ячĕсем пачах çук вăл хаçатра. Апчах

та Сталин ҫинчен ҫырнă сăвăсем тата юрă йĕркисем пур. Ун чухне те, хальхи пекех, ĕҫлекен ҫынсене ырласа ҫырнă материалсем нумай. Ҫавăнпа Шупашкар район хаҫатне юратаҫҫĕ, хисеплеҫҫĕ. Фермăсенче, шкулсенче колхозсемпе предприятисенче «Тăван ен» хаҫата планеркăсенче час-часах вуласа параҫҫĕ, хаҫатра ҫырнă информацисемпе, цифрăсемпе усă кураҫҫĕ.

Ҫавна шута илсе редакцири журналистсен татах та ҫавраăҫуллăрах пулмалла, оперативлă информацине хăвăртрах халăх патне ҫитерме тăрăшмалла. Анчах ҫăмăл мар вĕсене хальхи вăхăтра. Хаҫат кăларма хутпа бензин тата ытти япаласене туянма укҫа-тенкĕ ҫитменни, сотрудниксем темиҫе уйăх ĕҫ укҫи илейменни, паллах пăшăрхантарать хаҫатҫăсене. Хăш-пĕрисене хваттерсем те кирлĕ. Ҫавăнпа та районти яваплă ҫынсен айккинчен сăнаса ҫеҫ тăмалла мар, май пур таран пулăшмалла. Мĕншĕн тесен редакцинче ĕҫлекенсене кăна мар, пĕтĕм район ҫыннисене кирлĕ «Тăван ен» хаҫат. Эпир вара пурĕ 60 пин ҫынна яхăн ҫак районта пурăнатпăр.

Пĕрремĕшпе 7999 номерлĕ хаҫата юнашар хурса тепĕр хут тимлĕн тишкерсе тухрăм. Уйрăмлăхсем нумай. Елĕк кашни саспаллине алăпа пухнă пулсан, халĕ вара компьютерпа хаҫат кăлараҫҫĕ. Ку вара ҫĕрпе пĕлĕт пекех расна япала.

Апла пулсан, хаҫат ĕҫченĕсем пĕр выранта тăрасшăн мар, вĕсем Юрий Петрович Степанов тĕп редактор ертсе пынипе, хушăран ҫил хирĕҫ вĕрет пулсан та, малаллах утаҫҫĕ, талпăнаҫҫĕ.

Кӳкеҫ типографийĕнче ĕҫлекенсен пултарулăхĕ те пысăк шайра. Вĕсем редакципе пĕр чĕре ĕҫленĕ евĕр пĕрле хаҫат кăларнă. Хаҫата ҫапса пичетлесе пĕтермесĕр, тепĕр чухне ҫурҫĕр иртсен те ĕҫе вĕҫлемесĕр киле кайман.

Паянхи 8000-мĕш номер — чуна савăнтармалли хаҫат. Эпир кашни пилĕк ҫултах хамăр ҫуралнă куна юбилей тесе палăртатпăр пулсан, хаҫата вара кашни 1 пин номер урлă ҫеҫ юбилей теҫҫĕ. Вăл вара ултă ҫул та 5 уйăхран ҫеҫ килет. Мĕншĕн тесен хаҫат ҫулталăкра 156 номер тухса тăрать.

Апла пулсан, паянхи «Тăван ен» хаҫат кашни ҫыннăн чи сумлă та пархатарлă тата асăнмалăх парне пулса тăрать.

Ҫавăнпа «Тăван ен» тухсах тăтăр, хаҫат редакцинче тата Кӳкеҫ типографийĕнче ĕҫлекенсен кун-ҫулĕсем вăрăм пулччăр, вĕсен сукмакĕсене яланах хĕвел хăйĕн ăшшипе ҫутатса тăтăр.

МЫ РАДЫ ПОМОЧЬ...

От 20 ноября 1997 г.

Являясь постоянным читателем «Чебоксарских строителей», я хорошо представляю жизнь акционерного общества. А в одном из прошлых номеров узнал, что ОАО «Честр» частенько остро не хватает кирпича. В то же время наш завод, особенно зимой, очень нуждается в стабильной его вывозке. В вопросе сбыта мы придерживаемся принципа: «Лучше продать больше товаров с маленькой прибылью, чем малое количество — с большим доходом». В данном случае цена товара должна быть такой, чтобы доходы покупателя дали ему возможность закупать понравившуюся ему вещь.

За последнее время мы ОАО «Честр» ежегодно реализовываем в пределах 50 тыс. штук кирпича. И только в октябре этого года отгрузили на своем транспорте на строительство жилых домов по пр. И. Яковлева, по ул. Маршака, поз. 1, по пр. М. Горького, а также административного здания налоговой инспекции Чебоксарского района всего 20 тыс. штук. При этом мы не торопим с оплатой, то есть даем беспроцентный кредит. Потому что доверяем вашей фирме по ряду причин: во-первых, со многими из нынешних руководителей в 80-х годах приходилось работать вместе, когда они, как и я же, трудились в должности мастера, прораба или гл. инженера стройуправлений (Тужилкин А., Ефимов В., Китаев В., Малышев В. и другие), и, во-вторых, ваши каменщики традиционно сильны как по качеству кладки, так и по скорости возведения сооружений. Например, на строительстве 209-квартирного жилого дома по пр. 9-й пятилетки в бригадах Никитина И. К., Гаврилова А. В. и Алдушкина В. И. выработка за смену на одного рабочего составила более одного кубометра кирпичной кладки.

Мы всегда рады помочь вам в увеличении производительности кладки. И чтобы ваши каменщики не простаивали из-за отсутствия кирпича.

ПЕР УЛМИПЕ ТУТА ПУЛАН

Декабрĕн 4, 97 ç.

Çак çулхи пек тĕлĕнмелле пахчаçимĕç ӳсессе унччен шухăшламан. Çуркунне те тислĕк нумайрах хывăмăр, те çанталăкĕ ăнăçлă пулчĕ, анчах каласа хăвармалла: малтан çумăрĕ пулмарĕ, çĕре типĕтсех лартрĕ, июльпе август уйăхĕсенче çумăрĕ эрнере икĕ-виçĕ хут ӳккелерĕ, сентябрь варринчен вара кашни кунах пĕрĕхтерме, уйăх ытла тенĕ пек пĕр хĕрхенмесĕр йĕнетрĕ.

Пирĕн таврари ялсенче çĕрулмине хăш-пĕр «кукăр» алăллă çынсем ан вăрлаччăр тесе уй-хирсенчен кăларса август вĕçĕнчех сакайсене кĕртсе хураççĕ. Пирĕн çемье, ĕлĕк ватă çынсем калаппине астуса, çĕрулмине кăларма васкамарĕ. Халĕ те, пĕчĕк ача пулнă чухне те, асаттепе асанне калаппине паянхи пек астăватăп. Вĕсем, 80 çултан иртнĕ çынсем, ак çапла вĕрентетчĕç: Мăнал ял чиркĕвĕн уявĕччен çĕрулмине кăларма юрамасть. Çеçки типме пуçлана пулсан та çĕртен хĕл каçма вăй пухать, ӳсет, çирĕпленет. Нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ, мăналсем çав уява сентябрĕн 21-мĕшĕнче палăртаççĕ.

Кишĕре те юр çăвиччен, çĕр шăнтиччен эрне малтан çеç кăлартăмăр. Октябрĕн 14—15-мĕшĕсенче. Мĕншĕн тесен кишĕр сивĕрен хăрамасть. Пысăк та шултра ӳсрĕç вĕсем. Çав вăхăтрах темиçе пуçлисем те хутран-ситрен тухкаларĕç. Пĕри вара — сакăр «пӳрнеллĕ». Ӳкерчĕкре кăтартнă пахчаçимĕçе тепĕр çул лартса пăхасшăн. Хăйнеевĕр сăнав тата селекци ирттерес ĕмĕт пур.

Хаçат урлă пирĕн пĕчĕк вăрттăнлăхпа паллаштарасшăн. Çĕрулмине çуркунне ăшатма енне кайсан, юр прĕлсе пĕтичченех, верандăна хĕвеле 2 эрнелĕх тухса хуратпăр. Вара снмĕс пăпкасем тухма пуçлаççĕ. Хăш-пĕр çынсем вунă кун малтанах çĕрулмине çурмалла касатпăр теççĕ. Анчах эпир лартнă кун çеç çав ĕçе таватпăр. Пирĕн шухăшпа, çак меслет çĕрулмипи сĕткене хăйĕнчех хăварма пулăшать.

Лартма, кăнкалатма, купалама, кăларса тата пуçтарса упрама хума çавăн пекех кăткăс япала. Ун пирки уйрăм калаçу.

ЛЕВ РУМЯНЦЕВА — ПАРНЕ

Декабрĕн 18, 97 ç.

Шупашкарти агрегат заводĕнчи «Илем» ансамбльте хитре те яштака качча Лев Леонидович Румянцев гитарăпа каласа тата юрласа савăнтарнă. Нумай юрра хăех кĕвĕлесе илемлетнĕ.

Аста специалист пулнă пирки ăна керамблок кăларакан завода ĕçлеме чĕнеççĕ. Кунта вăл цехшăн футболла та, волейболла та вылять. Кайран тем амакĕ пулать, уран пӳринсем ыратма пуçлаççĕ. Спшленме больницăна пумай вăхăт çӳрет пулин те чир шалаллах кĕрсе пырать, урана татма тивет. Чире чарма май çук тенĕ. 30 çултан иртнĕ арçына урама тухса çӳреме питĕ хĕн пулса тăрать. Операци хыççăн 9 çул иртнĕ пулин те, вăл нихăçан та хăйне пĕччен туймасть. Савăюрăсем çырать, водителе вĕренсе тухать. Анчах явапла çынсем 5 çул каялла машина илсе пама сăмах панă пулсан та, пурнăçа кĕртме васкамаççĕ-ха. Юлташĕсем ун патне тата-шах кĕрсе тухаççĕ. Пирĕн районти Самуккасси ялĕнче çуралнă çыннăн тусĕсем нумай. Эпир те, Шупашкар кирпĕч заводĕнче ĕçлекенсем, Кӳкеçре Советски урамĕнче пурăнать пулин те, Лев Леонидович Румянцев патне час-часах кĕрсе тухатпăр, май пур таран пулăшма тăрăшатпăр. Пирĕн коллектив Л. Л. Румянцева Çĕнĕ çул ячĕпе асăнмалăх парне хатĕрлерĕ — çур çуллăх «Таван ен» хаçат çырăнса пачĕ.

ПУХУ ХЫЧЧĂН КОНЦЕРТ

Декабрĕн 20, 97 ç.

Çак репортажа хут çине çырас та мар тенĕччĕ. Анчах хаçат редакцийĕн пĕр ĕçченĕ мăналсемпе кăшăваштсем яла концертпа килни çинчен çырма ыйтсан: «Эсĕ хăв та журналист. Тепĕр номер валли статья илсе кил», — терĕ.

Эпĕ çырнă йĕркесем хаçатра пичетленнипе паянхи пек аса илетĕп. Пирĕн района тата Шорккари çыл арманпе курма французсем килнĕччĕ. Çаван çинчен халăха пĕлме историре юлтăр тесе шурă хут çине çырсан, «Таван ен» хаçатăн тĕп редактор пӳлĕмне именсе кĕрсе тăтăм. Вăл маи статьяна ву-

ласа тухсан пичетлеме юрăхлă тесе пĕлтерчĕ, татах та çырма, çыхăну тытма сĕнчĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, тепĕр икĕ кунран, «Тăван ен» хаçатра пĕрремĕш страницăра «Французсем — Шорккара» статья пичетленсе тухрĕ. Çакă мана хавхалантарчĕ тата савăнтарчĕ, çĕнĕ вăй-хăват кĕртрĕ.

Паянхи тема та пирĕн районшăн, ялсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шорккă ялне газ кĕртес пирки вăл. Çав ятпа клубра халăх йышлăн пуçтарăнчĕ. Малтанах Сарапакасси ял администрацийĕн пуçлăхĕ Л. Г. Федоров сăмах илчĕ. Газ кĕртес енĕпе вăл опытлă специалист. Çатра Хочехмата, Пикшике газ кĕртме вăл нумай тăрăшнă. Районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ В. П. Дмитриев тата клуб заведующийĕ В. А. Журавлев газ кĕртме Хусанран пăрăх илсе килни тата проект туса пĕтерни çинчен пĕлтерчĕç. Çак ĕçе тума ялта пуху иртерсе кашни килтен 800-шер пин тенкĕ пуçтарма йышăннă. Халăх пĕр шухăшлă пулса газ кĕртес ĕçре Николай Прокопьева тăрăшма ыйтнă. Паллах, çак ĕçе вĕçне çитерме нумай вăй хумалла, чи йывăр ĕçе пурнăçлама тивет. Ял администрацийĕн çак ырă çынна пулăшсах тăмалла. Унсăрăн ĕçĕ малалла каймĕ.

Пухура çĕнĕ клуб тăвас пирки те сӳтсе яврĕç.

Пуху хыççăн тахçантанпах кĕтнĕ концерт пуçланчĕ. Программăна Çатра Хочехматра çуралнă Светлана Мижикова ертсе пычĕ. «Хуçалăхсем юнашар пулин те çулĕ кĕске пулмарĕ, çичĕ уй урлă каçрăмăр»,— терĕ вăл.

Унтан сцена çине хор тухрĕ. Вĕсем Г. Лебедевпа Н. Тукташ çырнă «Тăван çĕршыв» юрăпа концерта пуçларĕç. Юрăпа ташă коллективĕ кăçал 50 çул тултарать. Ушкăна йĕркеленĕ Л. А. Остеров çитмĕл иккĕре пулин те санран пăхма аллăри пек. Юман пек çӳллĕ те кĕрнеклĕ çын. Хăех музыка инструменчĕсемпе калать, баянпа вылять тата юрлать.

Г. Ф. Коннов çырнă статьясене час часах «Тăван ен» хаçатра вулама пулать. Кунсăр пуçне вăл юрă шăрантарма та ăста. Курма килнĕ халăха вăл «Выхожу один я на дорогу» юрăпа тата «Дон Кихот» серенадăпа савăнтарчĕ.

Степан Максимов кĕвĕленĕ «Асран каймăк аки-сухи» юрă питĕ хитре янăрать. Малтан арçынсем виççĕмĕш сасăпа юрлаççĕ, унтан хĕрарăмсем хутшăнаççĕ.

А. Портнова хуткупăспа каласа «Хуняма» юрă шăрантарсан клубри хăшпĕр ватăсен питĕнче савăнăç куççулĕ те палăрчĕ.

Н. Константинова вара пушкăрт тата испани ташшисемпе çамрăк каччăсен чĕрисене хытăрах таптарчĕ çеç мар, вăл хăйĕн хусканăвĕпе, çинçе пилĕкĕпе тата илемлĕ сăн-пичĕпе куракансен туйăмне вăратрĕ.

Мăнал шкулĕн директорĕ В. Н. Калешов çамрăк пулин те палла артист пекех юрлать. Паллах, унăн халăха пĕрле пуçтарса, автобус туса Шорккă ялне çитме нумай тăрăшмалла пулнă.

Шорккари ватă çынсен ĕлĕкхи авалхи йăлине концерт пĕтсен хаклă хăнасене кĕрекепе лартса, тин çеç кăмакара пысс тухнă кукăль-икерчĕпе, хăмлалла сăрапа, вĕри чейпе сăйларăмăр.

Сумлă хăнасем вара пирĕн ялăн фольклор ушкăнне «Тавсси» телеканалпа Ишлейри кирпĕч завочĕн кану каçĕнче курнă пирки юрăсем юрлаттарчĕç. Пуçланчĕ вара тепĕр концерт, юрă-ташă...

«Уйăлассăм килмест ай тăванран, тăван ытла хаклă ай пулнăран», — терĕç пирĕн хăнасем, вĕсене ăсатма тухсан.

КУРМАСĂР АН ЮЛĂР!

Январĕн 13, 98 ç.

Суйлав тапхăрĕнче халăх юратакан «Тавсси» телепередача пĕр вăхăт тухаймарĕ. Унăн ертӳçи А. Тарасов 1997 çулта çак передачăна хутшăннă çынсене пĕрле пуçтарнă; вĕсем Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илнине паян телевизорпа курма пулать. Пирĕн районтан телепередачăна хутшăнма çак çынсем тивĕçлĕ пулнă: юрă ăстисем Лукăпа Олег Семеновсем (Тутаркассинчен), Кӳкеçри К. Маркс урамĕнче пурăнакан Николай Марковпа унăн мăшăрĕ, Альбина Сарри юраçă та та ыттисем те.

Арсений Алексеевич каланă тăрăх, Çĕнĕ çулта творчествăлла ĕçсен калăпăшĕ пысак. Передачăсене хатĕрлеме çĕнĕ видокамера уйăрса панă. Çавăнпа вĕсем районсем тăрăх тухса çӳреме пуçласçĕ, интереслĕ самантсене пленка çине ӳкереççĕ.

Пирĕн районти ялсенче те пулма ĕмĕтленеççĕ. Уйăмах вĕсене Шорккă тăрăхĕнчи ялсем, вĕсен пурнăçĕ, канăвĕ, ĕçĕ тата фольклор ушкăнĕ интереслентерет.

Паян вара «Тавсси» телеканалпа сумлă та хисеплĕ çынсем Арсений Тарасов патĕнче Çĕнĕ çулта хăнара пулнине пăхма васкăр.

ШУПУÇÇЫНИНЕ ХИСЕП ТУНИ ПУЛĔ

Январĕн 27, 98 ç.

Чăвашсен паллă поэчĕ Н. В. Шупуççынни Иккасси ялĕнче çуралса ÿснине вулакан пĕлме кирлĕ. 1897—1905 çулсенче кунти шкулта вĕреннĕ. Вăл кăна мар, кунтах 1904—1907 çулсенче паллă драматург, композитор Ф. П. Павлов, 1964—1970 çулсенче Георгий Ирхи поэт, ЧР тава тивĕçлĕ учителе Юрий Егорович Марков (вăл халĕ те, пенсире пулин те, шкулта еçлет) тата ытти паллă çынсем вĕреннĕ.

Шкула 1887 çулта Н. Я. Яковлев тăрăшнипе уçнă. Ун чухне вăл пĕр класлă училище шутланнă. 1975 çулта икĕ хутлă çĕнĕ шкул хута каять. Шупуççынни, Павлов вĕреннĕ çурта пăсмаççĕ, унта интернат йĕркелеççĕ. Юнашар ялсенчен çÿрекенсем çил-тăман, çурхи шыв-шурта çĕр каçма пултараççĕ.

Инкек куçа курăнса килмест теççĕ çав. Çĕнĕ шкула, 22 çул ĕçленĕ хыççăн, 1997 çулта хупаççĕ. Стенасем, никĕс, тимĕр-бетонран тунă мачча плитисем çурăлма, ишĕлме пуçлаççĕ. Ватă çынсем çĕнĕ шкул чиркÿ масарĕ çинче ларинне ас тутараççĕ. Клуба та, чиркĕве пăсса, çав вырăнтах лартнăмĕн.

Çапла вара кивĕ шкула тавранма тиврĕ. Кунта кашни класри кăмакана кашни кун вутăна хутмалла. Кивĕ çурт, паллах, ăшша та вăрах тытмасть. Спортзал, анат çимелли уйрăм пÿлĕм çук. Çакă мана, Иккасси шкулĕнчен вĕренсе тухнăскере, интĕ пăшăрхантарать. Шкул директорĕн çумĕ Георгий Федорович Захаров калать тăрăх, вăл тăсти пысăк пуçлăхсем патне çитнĕ, пулăшу ыйтнă, кĕтсе илеймен. Санэпидстанци нормисене пăхăнма май çук. Ш к у л а хупмалли кăна юлать. 20 учителĕн, техперсоналăн, 150 ачан ăçта кайса кĕмелле?

Пирĕн республикăра, статистика кăтартăвĕсене ĕненсен, кашни çул 12 çĕнĕ шкул хута яраççĕ пулсан, Иккассинче те тытăнмалла çак ĕçе. Унсăрăн çамрăк ăру пирĕн паянлăха

ăнланмĕ, каçармĕ. Иккассинче пурăнакансем çак пăтăрмаха сирсе яма пулăшу ыйтаççĕ, ырă çынсем, организацисем тупăнасса шанса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен Иккасси шкулне пĕтерни И. Я. Яковлева, Н. В. Шупуççынниле, Ф. П. Павлова, ытти ентешсене хисеплеменнине пĕлтерет.

РАЙОН ЧЫСНЕ ТЕ ХŸТĔЛĔÇ

Апрелĕн 7, 98 ç.

Иртнĕ шăматкун Кÿкеçре Шупашкар районĕн каратэ мелĕпе кĕрешес енĕпе пĕрремĕш чемпионачĕ пулчĕ. Уйчен пĕчĕк турнирсем кăна йĕркеленеччĕ. Каçал вара тренерсем пĕр шухăшлă пулса пĕр стильне — сетокан енĕпе ирттерес терĕç. Пирĕн районта кекÿсинкай, тэквандо, кунфу, фудокан тата ытти меслетсем те ăнăçлă аталанаççĕ.

Тÿрех каламалла — кĕрешÿре никам та сусăрланмарĕ. Кун пекки каратэре сахал пулать. Ишлей ялĕнчен килнĕ 9 спортсменран ытларахăшĕ 1—3-мĕш вырăнсене йышăнчĕ. Вĕсене Чăваш патшалăх ялхуçалăх академийĕнче IV курса вĕренекен тата тренер пулса ĕçлекен Яковлев Кушевпа Анатолий Мушлаев хăнăхтараççĕ. Иккĕшĕ те Чăваш Республикипе Раççей чемпионачĕсене хутшăннă тата ăста каратистсем. Вĕсем тăрăшса вĕрентнине Кирилл Матвеев, Константин Коскелайнен хăйсен çулхисен ушкăнĕсенче пĕрремĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Кÿкеçри пĕрремĕш шкулăн физкультура учителĕн А. Т. Федотовăн каратисчĕсем те хастар кĕрешрĕç. Алексей Тимонов тата Дмитрий Васильев чемпион ятне çĕнсе илчĕç. 17 çулхи яшсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Дима Петров тивĕç пулчĕ. Вăл Шупашкарти Чăваш-турка лицейĕнче вĕренет. Ăна Кÿкеçри иккĕмĕш шкулăн физкультура учителĕ В. Р. Миронов вĕрентет.

Хĕрсем хушшинче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме Светлана Ефремова пултарчĕ. Вăл В. А. Иванов ертсе пыракан каратэ секцине çÿрет. Валерий Алексеевич — район администрацийĕн халăх сывлăхне çирĕплетес, физкультурăпа спорт пайĕн заведующийĕ. Çак ырă кăмăллă, тарават çынна пула пирĕн районта спортăн 16 енĕпе ăмăртусем иртеççĕ.

Иккасси шкулĕнчи 8-мĕш класра вĕренекен Леонид Егоров иккĕмĕш вырăн йышăнма пултарчĕ. Эпĕ, Иккассинче

каратэ секцине тренер пулса ертсе пынă май, Леонид икĕ çул каялла спортзала Хĕвелтухăç мелĕпе кĕрешме пĕрремĕш хут пынине паянхи кун пек астăватăп. Занятисене тăрăшса çӳрени ахаль пулмарĕ. Унăн юлташĕсем Дениспа Анатолий Афанасьевсем ката программăра хӳтĕленмелли тата тапăнмалли мелсене витĕмлĕн кăтартрĕç. Чемпион ятне вара Эдуард Наумов çĕнсе илчĕ.

Çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе, парнесемпе чысларĕç. (Сăмах май, асăннă ăмăртăвăн тĕп спонсорĕ — Ишлейри кирпĕч завочĕ). Вĕсенчен нумайăшĕн апрель вĕçĕнче иртекен Чăваш Республикин чемпионатĕнче пирĕн районăн чысне хӳтĕлеме гивет.

«Таван ен» хаçат урлă треперсене, спортсменсене, Кӳкеçри пĕрремĕш номерлĕ шкул коллективне турнир ирттерме пулăшнăшăн тав сăмахĕ калас килет.

ХАММУРАПИ — ЦАРЬ ВАВИЛОНА

(начало, продолжение на стр. 65)

Майăн 16, 98 ç.

В последнее время модно хвалить или ругать законотворческие органы. В связи с этим не безынтересно знать, когда и кем эти законы придумывались и писались. Некоторые думают, что после революции, совершенной в России в 1917 году, другие же связывают с французской конституцией 1791 года, а третьи имеют в виду «законы XII таблиц», «древнейший свод римского права», составленный в 450 г. до нашей эры десятью мужчинами-децемвирами.

Намного позже, а именно в XX в до н. э. в маленьком государстве древнего Востока в Эшнунпах нашлись мудрые люди, которые придумали правила совместного проживания в обществе. До нас дошли всего восемь параграфов. Один из пунктов параграфа гласит: «Если человек купит раба, рабыню, вола или любую другую покупку, а продавца не сможет указать, то именно он — вор». На берегу реки Ефрат начал отстраиваться из глины, смешенный рубленой соломой и сеном город Вавилон. Наибольшего величия Вавилонское царство достигло при правлении Хаммурапи в 1792—1750 годах до н. э. 130 лет тому назад археологи нашли здесь плиту из черного камня высотой около 2 метров. Вверху изображен царь Хаммурапи, получающий от бога солнца жезл — символ власти. Ученые прочли надписи закона на обеих сторонах — камня, выполненные долблением. Многие историки утверждают, что чуваши когда-то обитали между реками Тигр и Ефрат. Быть может наши дальние предки участвовали в строительстве древнего Вавилона. Царь, правивший Вавилоном в XVIII в. до н. э. под именем Хаммурапи, установил законы, которые в настоящее время умещаются в маленькую книжечку. Они почти все дошли до наших дней. Любопытно ознакомиться с некоторыми из них:

— Если человек украдет достояние Бога или дворца, то этого человека должны убить, а так же того, кто примет из его рук украденное, должны убить.

— Если человек имеет долг, его жена, сын или дочь должны быть в рабстве 3 года.

— Если в доме человека вспыхнет огонь и человек, пришедший тушить его, обратит свой взор на пожитки хозяина дома и возьмет себе что-нибудь из пожитков хозяина дома, то того человека должны бросить в этот огонь.

— Если жена человека будет захвачена лежащей с другим мужчиною, то должны их связать и бросить в воду, если хозяин жены сохранит жизнь своей жене, то и царь сохранит жизнь своего раба.

ПАТШАЛАХ КАНАШĔ ЙĂНАШМАРĔ-ШИ?

Майăн 16, 98 ç.

Алăра çĕнĕ саккун — Патшалăх Канашне депутатсене суйласси çинчен. Анлă та вăрăм документ: 11 пайран, 79 статьяран тăрать. Çиелтен пăхсан, пурте йĕркеллĕ те хăйĕн выраннĕнче пек. Сахалтан та 4 çул хатĕрленĕ-çке ăна. Анчах, тĕплĕн тишкерсен, çитменлĕхсем пур-ха кунта.

Тĕслĕхрен, 13-мĕш статья — «Суйлав округĕсем йĕркелесси». Малтанхи саккунпа 28 округ пулсан, халĕ вара — 87. Апла пулсан, комисси членĕсен йышĕ унчченхинчен тепĕр 600 çынна яхăн ытларах ӳсет. Комиссире вĕсен суйлав кунĕнче сахалтан та пĕр талăк ĕçлемелле. Хĕлле е кĕрхи ĕçе вĕçленĕ хыççăн çак суйлава ирттернĕ пулсан ытлашши сӳнӳ пулмĕччĕ, анчах çулла, хăяр-помидор шăварнă, утă çинче ĕçленĕ тата çĕрулми купаламалли вăхăтра ирттерни çынсен кăмăлне пăсма пултарĕ.

Пирĕн районта 4 округ йĕркеленĕ: Тутаркасси, Кӳкеç, Атайкасси, Ишек. Кашни округра 11 пине яхăн суйлавçă пулмалла. Анчах темле çавăрсан та, шăп та лăп 11 пин çын уйăрма май çук. Вара пуçланать тавлашу: «мĕншĕн пире çак округа кĕртнĕ, пирĕн тепĕр округра пулас килет» йышши тĕрлĕ ыйту. Ку çеç те мар, çын шучĕ çитмен пирки ишексен Красноармейски районĕнчен пĕр пине яхăн çынна илмелле. Ишекĕсем вара кăмăлсăр. Вĕсен шучĕпе тутаркассисем Сĕнтĕрвăрри районĕн çыннисене илме тивĕç. Кун хыççăн ял администрацийĕн пуçлăхĕсемпе колхоз председательĕсем ялсене пайлама пуçлĕç. Кашнинех хăйне евĕр тĕрĕслĕх шырама хатĕр, вĕсем калана пек тумасан суйлава кайманнипе хăратма пикенесшĕн е автобус памастпăр теççĕ.

Иртнĕ суйлавра район администрацийĕн пуçлăхне суйланă вăхăтра 39 пин те 726 суйлавçăран 15 пин те 991 çын хутшăнса бюллетене тĕрĕс çырса ещĕке янă Вăл 40,2 процент пулать. Чăваш Республикин Президентне суйланă чух 57,5 процент пулнă.

Паллах, Президентпа пĕрлех Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйланă пулсан, питĕ аван пулмаллаччĕ. Укçа-тенки те перекетленетчĕ. Анчах «халăх тарçисем» çынсем каланине хăлхана чикмерĕç, илтмĕш пулчĕç.

Нумайăшĕ июлĕн 12-мĕшĕнче суйлав пулассине илтмен те, анчах çав кун Ишек пасарĕнче ярмăркка пуласса лайăх астăваççĕ хăйсем.

Нумайăшĕн шухăшне пĕтĕмлетсе çакăн пек калама пулать:

пĕрремĕшĕнчен, кашни çул суйлава çӳресе халăх ывăннă;

иккĕмĕшĕнчен, суйланнă хыççăн депутатсене телевизорпа е банкетра çеç курма пулать. Миçе ферма (выльăх-чĕрлĕхе аша ăсатнă пирки) хупанине, хăшпĕр колхозсем (ĕлĕк тĕреклĕ) икĕ-виçĕ пая уйăлса кайнине депутатсем халлĕхе пĕлмеççĕ-ха тата ытти те.

Çĕнĕ çынсем çĕнĕлле ĕçлеме пуçлас тата хăйĕн «тарçипе» хăех хуçа пулас шанчăкпа çеç пуранать хальхи йывăр вăхăтра суйлавçă.

СУЙЛАВА КАЙМАЛЛА-ШИ?

Майăн 26, 98 ç.

Вун-вун çул каялла суйлав кунне халăх пысăк уява кĕтнĕ пек кĕтетчĕ. Клубсенче концерт лартма юсав ĕçĕсене çур çул малтан иртторетчĕç. Агитлистовкăсем, кандидатăн шанă çыннисем çукпа пĕрехчĕ, сасăлава суйлавçăсен 95 проценчĕ таран хутшăнатчĕ. Халĕ вара ЧР Патшалăх Канашĕ кăларнă саккунпа суйлав иртнĕрме 25 процент та çителĕклĕ. Кĕскен каласан, 100 çынтан 75-шĕ пымасан вимле сиенлĕх те пулас çук тесшĕн депутатсем. Анчах шур-сухалсем калана-çке: пĕр çын утать — çумкурăк шăтать, çĕр çын пырать — çул пулать.

Çынсем суйлава активлă хутшăнччăр тесе мĕн тăвас пулать-ха? Район администрацийĕн пуçлăхне суйланă вăхăтра суйлавçăсен 40,2 проценчĕ хутшăннă пулсан, июлĕн 12 мĕшĕнче 25 процентран кая пулма пултарать. Вара кĕркунне суйлава тепре иртнĕрме тивет. Çакă укçапа çилне вĕçтерсе яни çеç пулĕ.

Предприятисемпе фермăсем хупăнаççĕ, çав вăхăтрах çулталăкра икшер суйлав иртнĕретпĕр. Мĕншĕн тесен пĕр турпах сасă çитмен пирки кандидатсем суйланаймаççĕ. Юратьха, Н. В. Федоровăн чыс-сумĕ пысăк пирки вăл пĕрремĕш турта Президент пулма тивĕçрĕ. Индонезире пĕр кунрах ял старостинчен пуçласа район, республика депутачĕ тата патшалăх Президенчĕ таранах суйлаççĕ. Эпир те, ман шутпа, çав халăхран тăнпа та, сăн-сăпатпа пĕртте кая мар вĕт. Кам чăрмантарать пире вĕсенчен тĕслĕх илме?

Июлĕн 12-мĕшĕ — канмалли кун, Ишекри православи чиркĕвĕн уявĕ — Питрав. Çурт-йĕр ĕçĕсем туна, туй-çуй кĕрленĕ вăхăтра комисси членĕсен çынсене суйлав участокне илĕртме питĕ йывăр пулать. «Пурте суйлава!» — тесе çырнă плакат çав шăрăх кун выраннă пулĕ-ши? Е вăхăта сая ямасăр суйлава кĕркуннене куçармалла мар-ши?

ВИНОГРАДОВСЕМ

Майăн 30, 98 ç.

Ялта кӳршĕсенс çеç мар, пĕтĕм ял-йыша çывăх пĕлетĕп, мĕншĕн тесен вĕсене кашни кун тенĕ пекех куратăп, калаçатăп. Курмасан та ытти çынсенчен камăн хĕрне тата хăш кун çураçма килнине, туй кунне, камăн ĕнти пăруланине тата ытти çинчен те илтетĕп. Этемĕн йăхне те — аслашшĕнчен пуçласа мăнукĕ таранах — ăванах пĕлетĕп. Çав вăхăтрах Шоркăри Виноградовсен çемйи çинчен халиччен пĕлмен лайăх хыпар та илтме тӳр килчĕ. Пĕррехинче вĕсем çурт-йĕр купаламашкăн кирпĕч туянма завода пынăччĕ. Çавăн чухне тĕплĕнрех ыйтса пĕлме май килчĕ те манăн.

Эпĕ ача чух Ф. П. Виноградов «Звезда» колхоз председателĕччĕ. Хуçалăх тыр-пула, пахчаçимĕç вăхăтра пуçтарса патшалăха парса тăратчĕ. Фадей Прохоровича халăх çеç мар, район пуçлăхĕсем те хисеплетчĕç. Çавăнпа пулĕ колхоз ĕçĕсене туса пыма «Победа» автомашина çирĕплетсе панă. Çакăн пек техника пирĕн районта пĕрремĕш пулнă. Ку автомашинăпа колхоз уй-хирĕсем тăрăх запас пайсем, сĕрмеллисунтармалли материалсем турттарнă. Мăшăрĕ, В. Ф. Амурнева ял Советĕнче секретарь пулса тивĕçлĕ канăва тухичченех ĕçленĕ. Халĕ Вера Федоровна мăнукĕсене ялти ĕçе хăнăхтарать, воспитани парать. Вĕсем виçĕ ывăл, пĕр хĕр пăхса çитĕнтернĕ. Пурте çемьеллĕ, ача-пăчаллă ĕнтĕ. Уйрăмах манăн аслă ывăлĕ Валерий çинчен чарăнса тăрас килет. Вăл Иккассинчи шкулта вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн энергетика техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Шкулта та спортпа тусла пулнă пирки хулара тренировкăсене тимлĕн çӳреме пуçлать. Çара илсе кайсан виçĕ çул велосипедпа тата йĕлтĕрпе тусла пулнă. 1968 çулта спорт мастерĕн ятне çĕнсе илнĕ. Олимп чемпионĕне Валерий Ярдыпа пĕрле трассăсем тăрăх нумай тар юхтарнă. Каярахпа Валерий Фадеевич университетра тата «Спартак» спорт обществинче тренер пулса ĕçленĕ. Халĕ те ăна час-часах чуппине курма пулать. «Нумай-нумай километр чупма вăй нумай кирлĕ-ске, эсĕ тутлă апат çиен е урăхла вăрттăнлăх туппă?» — тесе ыйтсан, вăл кĕскен çапла хуравларĕ: «Тренировкăсене час-часах ирттерсен организм хăех перекетлĕн ĕçлеме пуçлать».

Валерий Фадеевич халĕ Шупашкарта пĕр предприятие ертсе пырать. Мăшăрĕпе, Вера Никифоровнăпа, хĕрпе ывăл

пăхса ӳстернĕ. Вĕсен мăнукĕсем те пур. Сăпайлă çынсем вĕсем — Виноградовсем. Кирпĕч туянма пыман пулсан, паян кун та пĕлес çук Шоркка ялĕнче ырă чунлă, ăшă кăмăллă çынсем пурăннине.

КĔРЕШӲ ВАЙЛАНАТЬ

1998 ç., çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕ

Çу уйăхĕн вĕçĕнче Чăваш обществăна культура центре хăйĕн черетлĕ конференцине ирттерчĕ. Çак юхăм пурĕ виçĕ пине яхăн çынна пĕрлештерсе тăрать. Унăн ертӳçи — пĕтĕм тĕнчипех чăна тухнă чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши.

Конференцире виçĕ ыйту пăхса тухрĕç. Малтанах Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен виççĕмĕш съездне çĕртме (июнь) уйăхĕн вĕçĕнче Шупашкар хулинче ирттерес терĕç. Нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ, пĕрремĕш съезд 1918 çулта, иккĕмĕшĕ 1989 çулта пулнăччĕ. Конференцире Юхма Мишшин «Авалхи чăвашсем» кĕнекине презентацилерĕç. Çак кĕнекере ĕмĕрхи чаплă чăваш паттăрĕсем тата вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, ĕлĕкхи чăваш хулисем çинчен çырнă тепчев материалĕсем чылай.

Виççĕмĕш ыйтупа сумлă çынсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн кандидачĕ пулса суйлава хутшăнма ыйтрĕç. Пирĕн районтан çак çынсем тивĕç пулчĕç: А. Н. Пушкин, В. С. Давыдов, Н. А.Столяров, Л. Я. Гаврилов тата çак йĕркесен авторĕ.

ПУР ЕНЛĔН ПИÇĔХНĔ

1998 ç., çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕ.

Емĕр пурăн — ĕмĕр вĕрен, теççĕ шур сухалла çынсем. Çак сăмахсене шута хурса эпĕ те, аслă пĕлӳ илнĕ пулсан та, çитес çул университетăн юридика факультетĕнчен вĕренсе тухса алла тепĕр диплом илме хатĕрленетĕп. Вара Ишлей кирпĕч завочĕ тата ăнăçлăрах ĕçлессе шанатăп. Ĕçпе вĕренĕве çыхăнтарма çăмăл мар, анчах мĕн чухлĕ ырă та сумлă çынсемпе тĕл пулма май килет университетра. Вĕсенчен пĕри — Урай Макаç ялĕнче çуралса ӳснĕ В. А. Александров. Вăл — Чăваш Республикин Арбитраж сучĕн пуçлăхĕ. Пире Вячеслав Алек-

сандрович вĕрентет тесен, эпир пĕрремĕш лекцине чăтăмсăрăн кĕтрĕмĕр.

... Зала вăтам пӳллĕ, хитре сухалла, сылтăм аллине хура портфель тытнă çын çăмăллăн утса кĕчĕ. Палăртнă темăна аплантарма пуçларĕ. Сăмах май Муркаш районĕнче пулса иртнĕ пĕр тĕслĕхе илсе кăтартрĕ. Колхоз председателĕ коммерсантсене пĕрремĕш хут 5 тонна, тепринче 10 тонна аш-какай парса ярать. Лешсем укçине тӳрех колхоз кассине хываççĕ. Виççĕмĕш хут килсен, 100 тонна ыйтаççĕ, укçине аш-какайне сутсан тӳрех пама шантараççĕ. Анчах уйăх, çур çул кĕтет колхоз хуçи — кăлăхах. Ирĕксĕр тенĕ пекех Арбитраж судне çитет. Шыраса тупаççĕ аш-какая шантару хучĕпе илсе тухнă çынна. Анчах унăн краватьсăр пуçне урăх пурлăх çук иккен. Камран халĕ шыраса илмелле?.. Пĕр сăмахпа — унăн лекцийĕсем яланах интереслĕ иртеççĕ. Лекцисем хыççăн Вячеслав Александровичăн пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашас терĕмĕр.

— Кашни çулах, отпуск вăхăтĕнче, Кавказ е Карпат сăрчĕсем çине хăнарма юрататпăр. Малтан базăра тренировкăсем иртеретпĕр, — тет вăл. — Ту тăррине парăнтарсан, хăвна хăв паттăр çын пек туя пуçлатăн. Базăна çитсен уйрăмах Высоцкий, Розенбаум юррисене итлеме килĕштеретпĕр. Альпинистсем — уçăмлă та ырă çынсем.

В. А. Александров вăтам пĕлӳ илсен, артист пулма виçе çул вĕреннĕ. Анчах пĕр операци хыççăн унăн вăхăтлăха сасси çĕтсе ларнă. Çавна пула вĕренӳ заведенине ылмаштарма тивнĕ — юридика факультетне куçнă. Правăна сыхлакан органсенче чи пĕчĕк должноçрен, следовательтен ĕçлеме пуçланă.

— Çынна йывăр ĕç час ватăлтарать, эсир çамрăк куранатăр, — пулчĕ ыйту.

— Малтан эпĕ час чирлеттĕм, форточка уç кăна, ӳслĕк пуçланатчĕ. Медицина журналĕсем, литература пумай вуларăм. Порфирий Иванов вĕрентĕвĕн мелĕпе ӳт пĕве пиçĕхтерме пуçларăм: сивĕ, хушаран пăрлă шыв хам çийĕн яраттăм. Пирус туртмастăп. Хăш чухне питĕ хистеççĕ пулин те, эрех таврашне пĕр грамм та ĕçместĕп. Малтан вĕсем кӳренетчĕç, халĕ хăнăхрĕç, — аплантарчĕ вăл.

Эпĕ Арбитраж сучĕн пуçлăхĕн персоналлă машина тата хурал пур пулнă теннĕччĕ. Шупашкар урамĕпе юнашар утнă май эпĕ çаван çинчен ыйтсан, Вячеслав Александрович кĕскен çапла хуравларĕ: «Кашнин хăйĕн шăпа. Америка президентне Кеннедие 3 пин çын сыхланă, анчах пурпĕр хӳтĕлеймен».

ПУЛТАРУЛЛĂ КОЛЛЕКТИВ

1998 ç., çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕ.

Тăрăшсан ӳсĕм пулмаллах. Çапла хаклама май пур Шоркăри фольклор ушкăнĕ районти ĕçпе юрă тата спорт уявĕнче иккĕмĕш вырăна тухнине. Çак коллектива Н. С. Сусарин ертсе ныма пуçласан, концерт программи пуянланнă куçкĕрет. Николай Сергеевич Кăшаваш ялĕнче çуралса ӳснĕ, Чăваш патшалăх педагогика институчĕн музыка факультетĕнче диплом илме хатĕрленет. Çав вăхăтрах чăпа тухнă «Уян» ансамбльте тĕрлĕ инструментсемпе вылять.

Пирĕн ушкăн пултарулăхĕ пирки «Таван ен» хаçатра материалсем час-часах пичетленеççĕ. Район администрацийĕн культура пайĕн заведующийĕ Л. А. Фомин та пирĕнпе тачă сыхăну тытать, тĕрлĕрен сĕнӳсем парать, сцена çине тухсан, мĕнле тытмаллине аплантарать, концертсене çамрăксене ытларах явăçтарма кирлине асăрхаттарать.

Концерт куракансен кăмăлне кайтăр тесен чылай тăрăшмалла. Акатуйра иккĕмĕш вырăна тухса магнитола илме тивĕç пулнă те çакнах çирĕплетсе парать.

Л. А. Платонова статйисем

Чун-чĕре хавас пулсан

ФОЛЬКЛОР УШКĂНĔ — ЕЛЧĔКРЕ

Хĕвел анчĕ, каç та пулчĕ —
Урхамах сисет
Шорккари фольклор ушкăнне
автобус кĕтет.

Кашни çынăнах хăй çуралнă вырăнĕ пур. Сăмахран, эпĕ Елчĕк районĕнче Патреккел ялĕнче çуралса ӳснĕ. Кирек ăçта пулсан та тăван кĕтес — Патреккел ялĕ хăйĕн патнех туртать.

Яла пырса кĕрсен икĕ енĕне те хитре çуртсем. Урам варрипе асфальт çулĕ йăлтăртатса выртать. Кашни кил умĕнче водопровод кранĕ: уç та таса шыв шăнкăртатса юхать. Çурчĕсем вара пĕринчен тепри илемлĕрех, пĕр хутлă, икĕ хутлă. Керменсем пекех. Эрешленĕ пӳртсем умĕнчен киленмесĕр иртсе каяймăн. Пăхса ытарма çук. Ӳркенмеççĕ ĕçлеме патреккелсем. Çавăнпа та вĕсем тулли те хаваслă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Халĕ Шоркка ялĕнче пурăннă май, фольклор ушкăнне унта хăпана илсе кайса кăтартас килчĕ. Елĕкрен Патреккел ялĕнче кĕрхи ĕççене вĕçлесен Успенски уявне прттернĕ. Юнашар ялсенчен те пуçтарăнса ĕçсе-çинĕ, юрă-ташăпа савăннă.

Патреккелне хыпар ятăмăр. Вĕсем хирĕç пулмарĕç. Фольклор ушкăнĕ те ăна хапăл тусах йышăнчĕ. Тĕплĕн хатĕрленсе репетицисем ирттерсе çула тухрăмăр. Автобусра юрă-кĕвĕ шăраннă пуçларĕ. Мĕнле-ха юрăсăр: çулĕ варăм, ăна кĕскетес пулать. Концерт программи те пысăк—икĕ пайлă. Пĕрремĕшĕнче фольклор ушкăнĕ юрлать, сольнăй номерсем. Иккĕмĕшĕ вара — хĕр çураçни, туй. Юрласа, такмаксем каласа сисмерĕмĕр те — Елчĕке çитрĕмĕр. Пире хуранлăхри кӳлĕ хĕррипче кĕтсе илчĕç. Кӳлли тăп-тăрă, таса. Уçă сывлăш. Йĕри-тавра сип-симĕс курăк, çуллĕ те хитре хурăнсем ӳсеççĕ.

Эпир çитнĕ çĕре икĕ хуран вĕресе пăсланса ларать. Пĕринче — шурпе, тепринче — чей. Кунта Елизавета анна, машăрĕ В. В. Петров хуçаланать. Ушкăнпа ларса апатлантăмăр, вĕри чей ĕçрĕмĕр. Хăнасем йыснан хастарлăхĕнчен тĕлĕнчĕç. Ăна ăшă сăмахсем каласа ăнăçу, ĕçре пысăк çитĕнӳсем сунчĕç.

Кайран йысна «Прогресс» колхоз çитĕнĕвĕсем çинчен каласа пачĕ. Пирĕн пата кĕçех машина килсе çитрĕ. Клуб работникĕсем иккен. Сывлăх сунса вĕри апат хыççăн вĕсем хăйсен юррисемпе паллаштарчĕç. Эпир те парăмра юлмарăмăр. Карталанса тăрса «Тăванăмăр çăкăр пиçнĕ» юрра юрларăмăр. Каç пуличчен вара экскурсие тухрăмăр. Сад пахчине çитсе куртăмăр. Таçтан аякран курăнса ларать светить тунă шап-шурă çăл куçĕ. Кам çитсе ĕçмĕ çав сиплĕ çăл шывне. Киленсех ĕçрĕм ăна. Ун хыççăн Патреккел ялĕнчи кермен пек çӳллĕ те хитре клуб умне çитсе чарăнтăмăр. Хамăран пултарулăхпа пирĕн Патреккел ялне тĕлĕнтермелле-çке. Нумай кĕттермерĕç — зала халăх лăк тулли пухăнчĕ.

Микрофон умне хитре те яштака пӳллĕ Наталья Вениаминовна Дмитриева тухса тăчĕ. Вăл — илĕртӳллĕ сăмах каласа концерта ертсе пыраканнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна Çатра Хочехматри шкул директорĕ пулма шаннă. Хăйĕн çепĕç сассипе илемлĕ сăмахсем тупса Патреккел ял халăхне кĕрхи ĕççем пĕтнĕ майпа саламласа ăшă сăмахсем каларĕ, концерта пуçларĕ. Сцена çинчи фольклор ушкăнĕ курма пухăнисене хăйĕн пултарулăхĕпе тыткăна илчĕ. Авкаланса-хуçкаланса хире-хирĕç ăшшăн пăхса «Аякри тăванĕн ай мĕн усси?», «Ăшăм çуннă вăхăтра калаçаймасан» юрăсене юрларĕç вĕсем.

Кĕрекене лар-ха, юр пуçласа пар-ха,— тесе сцена çинчи пукансем çине ларса капăкла, хăмлалла сăра ĕçрĕç. Аля Фомирякова выраçларан чăвашла хăй куçарнă юрра пуçласан чăтса лараймарĕç залри çынсем, ташлама пуçларĕç. Люба Петрова Çатра Хочехматри ватăм шкултан вĕренсе тухнă. Вăл вара залра ларакансене хăйĕн шăпчăк сассипе хальхи юрăсемпе тыткăнларе. Нумайччен алă çупса тав турĕç ăна. Даша Платоновапа Аня Егорова çамрăксен ташшине ташласа пачĕç. Пĕчĕк Анжелика Павлова вара Таня Буланова юрлакан юрăпа перремĕш хут сцена çине тухсах унран пĕрре те кая юрламарĕ. Анăçу та пысăк малашлăх кĕтет çак пĕчĕк хĕрсене. Концертăн пĕрремĕш пайĕ вĕçленес умĕн çак йĕркесен авторĕ те «Килтĕм хăнана» юрăпа сцена çине тухрĕ. Çак юрра юрланă чухне мана залра аннепе атте, анна, ниччесем, вĕсен ачисем, ытти тăвансем, ял çыннисем итлесе ларса юрă пĕтичченех тăваллăн алă çупрĕç. Хама хам çав вăхăтра филармони артисчĕ пек туйса илтĕм. Икĕ куçăмран

куҫҫуль юхса анчӗ. Таванран хаклӑ никам та çук. Вӗсем мана чечек сыххисем парнелерӗҫ. Сцена çине тухса ӑшӑ сӑмахсемпе тав турӗҫ.

Концертӑн иккӗмӗш пайӗ пуçланчӗ. Ӗлӗк-авалтан тырпул пуҫтарса кӗртсен ялсенче кӗр мӑнтӑрӗпе туйсем пуçланнӑ. Эпир те патреккелсене хӗр çураçниле кӑтартса парас терӗмӗр. Чаршав уçӑлса кайрӗ. Хӗрӗн ашшӗ-амӑшӗ туя хатӗрленеççӗ. Ашшӗпе амӑш рольне Вениаминпа Зинаида Семеновсем выляççӗ. Хӗрӗпе каччине — Фаинӑпа Владимир Евгеньевсем. Туй пуçӗ вара — Николай Алексеевич Платонов. Ишлейри кирпӗч завочӗн директорӗ вӑл, вӑхӑчӗ сахалтарах пулсан та, кашни концерта хутшӑнать. Çамрӑксене яланах тӗслӗх парать. Мӗнле-ха унсӑрӑн хальхи йывӑр вӑхӑтра? Нихӑçан та «çук, пулмасть»,— темест вӑл. Ыйтусене вӑхӑтра татса пама тӑрӑшать. Малалли ӗçре те ӑна ӑнӑçу çеç сунас килет.

Туйра карчӑк рольне вылякан Валерий Евгеньев ӑсталӑхпа палӑрчӗ. Хӑйӗн авалхи пысӑк йывӑç алтӑрӗпе сӑра ӗçтерсе халӑхсене сайларӗ.

Эрешленӗ кӗленчери эреххине клуб заведующийӗ В. А. Журавлев Шоркка кучченеçӗ тесе тутанса пӑхма сӗнчӗ. Туй арӑмӗсем вара саркаланса залри халӑха хӑйсен хитре тенкисемпе чӑнкӑртаттарса туй такмакӗсем шӑрантарчӗҫ.

Уяв каçӗ 2 сехете тӑсӑлчӗ. Кайран Патреккел клуб заведующийӗ чечек пуххи парнелесе ӑшӑран та ӑшӑ тав сӑмахӗ каларӗ пире. Эпир те вӗсене пирӗн пата пырса курма, концерт кӑтартма чӗнтӗмӗр.

Юлашкинчен çак концерта кайса кӑтартма пулӑшнӑшӑн, хамӑр савӑннишӗн, патреккелсене савӑнтарнишӗн район администрацийӗн пуçлӑхне Р. В. Данилова, районти культура пайӗн заведующине Л. А. Фомина, концерта хутшӑнакансене пурне те тав тӑвас килет. Тайма пуç вӗсене. Яланах хӑварӑн пулӑрулӑхпа çынсене савӑнтарӑр. Юрлӑр-ташлӑр. Нихӑçан та ан ватӑлӑр.

1996 çулхи, сентябрӗн 10-мӗшӗ.

МӐНАЛ ЯЛЕНЧИ УЯВ

Хӗл кунӗсем çитрӗç. Шорккари фольклор ушкӑнне нимӗнле çанталӑк та хӑратаймасть. Вӗсен ӗмӗчӗсем пысӑк — хӑнана чӗнекен кашни ял халӑхне хӑйсен хаваслӑ юрӑ-ташшине савӑнтармалла. Ӗлӗк-авалтан тухнӑ йӑлана пӗтермелле мар, концертран концерта çыпсен ӗçлесе ырӑ чунӗсене çӗнӗрен хавхалантармалла. Радиопа, телевизорпа чуна çӗклекен илемлӗ юрӑсем илтсен, ишӑçан та ватӑлмастӑн пек туйӑнать. Икӗ сехет çурӑ концертра ларсан вара тата пӗр вунӑ çул çамрӑкланса кайнӑ пек туятӑн хӑвна. Çав çенӗç юрӑсем кӑмӑл-туйӑма çӗклеççӗ, тӑнӑç пуранма, тухӑçлӑ ӗçлеме пулӑшаççӗ. Çав тӗллевпех фольклор ушкӑнӗ çула пуҫтарӑнчӗ. Концертна Мӑнал ялне кайса савӑнтармалла-çке пирӗн. Çула май Мӑнал чиркӳне те кӗрсе курасшӑнччӗ. Анчах та пирӗн шухӑш, ӗмӗтсем пурнӑçланаймарӗç. Автобус килмерӗ. Фольклор ушкӑнӗ куншӑн пуçа усмарӗ. Мӗнле те пулин кайса хамӑрӑн пултарулӑха кӑтартса ял халӑхне савӑнтарса килетпӗрех терӗç вӗсем.

Чӑнах та турӑ пулӑшнипе çав куна кӗтсе илтӗмӗр. Курасчӗ сирӗн — мӗн чухлӗ хаваслӑ çӗкленӳ вӗсен чӗрисенче. Капӑр тумланса вӗсем клуба пуханаççӗ. Кашни концертах кукӑльсӑмах пӗçереççӗ. Акӑ, пирӗн хушамӑрта чи асли — Елизавета Кирлловна Кириллова. Хӑй пенсире пулсан та, ӑна ваттисен шутне кӗртме çук. Яланах шӳтлӗ сӑмахсем тупать вӑл, интереслӗ пулӑмсем каласа парать. Çамрӑксене çынсем хушшинче хӑйсене мӗнле тытмаллине, каласмаллине вӗрентет. Кашни концертах вӑл çемçе те капӑшка сӳхи пӗçерсе пырать. Ӳркенмест, алли-ури питӗ ӑста, туман ӗçӗ çук. Фольклор ушкӑнӗ валли хӑй ӑсталаса, кӗвӗлесе юрӑсем çырать. Вӑл çырнӑ юрӑсене Мӑнал ялӗнче те юрласа патӑмӑр. Тӑвалӑн алӑ çунса чыс турӗç ватӑ учительницӑна çак юрӑсемшӗн. Талант çынна пӗрле çуралать, кайран ӑна малалла аталантарма çеç пӗлмелле.

«Пӑхра ырри пулсан, вӑл аякка ӳкмӗ», — тенӗ ӗлӗкхи ватӑсем. Амӑшне пӑхса Наталья Вениаминовна хӗрӗ те парӑмра юлмасть. Кашни концерт валлиех вӑл çӗнӗ пуçламӑшсем, ваттисен сӑмаххисем тупса хатӗрлет, концерт пуçланас умӗн ял халӑхне сывлӑх сунса ӑшшӑн саламлать. Унӑн кӑмӑлӗнче лайӑх енсенчен пӗри — çынна ырӑ тума тӑрӑшни. Ун пек çынсем хальхи вӑхӑтра сахалланса пыраççӗ. Хӑй шкул директорӗ пулса ӗçленӗ май, Çатра Хочехматра пурнӗ

те ырă тĕслĕхпе çунатлантарать вăл. Кĕçĕнреххисене пурнăçра ун пек пулма сĕнес килет.

Зинаидăпа Вениамин Семеновсене те ырăпа асăнмалла. Ялта хисеплĕ те ĕçчен мăшăр. Нумаях пулмасть вĕсем кĕр мăнтарĕпе çĕнĕ пӳрт ĕçки ирттерчĕç. Çамăл пулмарĕ вĕсене çак пӳрте çавăрма. Вениамин Семенович Шупашкарти трактор заводĕнче вăй хурать. Каласса татăлнă кунсенче сиктермесĕр репетицине çӳрет. Хăйĕн ăсталăхĕпе çынсене тĕлĕнтерет вăл. Зинаида Григорьевна вара тивĕçлĕ канура. Ир пуçласа мĕн каçчен килти хуçалăхра тăрмашать. Çавăнпа çак мăшăра тарават та çепĕç чунлă пулнăшăн ватлăхра канăç сунас килет. Çавăнпа вĕсене шанса туй сценарийĕнче ашшĕпе амăшĕн рольне шанса панă.

Владимир Андреевич Журавлев Шоркăра клуб заведующийĕ пулса ĕçлет. Тăрăшуллă та хастар çын. Ялта пуху, лекцисем тата тĕрлĕрен мероприятисем пулсан, халăха хăвăрт пуçтарма пулăшать, пăшăрхантарса тăракан ыйтусене тулли тивĕçтерсе пама тăрăшать. Кашни концерта кăпăклă чăваш сăри вĕретсе ырать. Мĕнле туй-ха чăваш сăррисĕр? Ана пĕр стакан ĕççенех юрлас килет, иккĕмĕшне ĕççен вара ташласа яратăн. Вĕсен пичĕсем кулăпа çиçеççĕ. Пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе пурăнать мăшăр. Пилĕк ача пăхса ӳстереççĕ вĕсем.

Семьеллĕ çынсем хушшинче çак йĕркесен авторĕ те мăшăрĕпе концерта хутшăнать. Халăхран уйрăлса килте ларас килмест пирĕн те. Ял халăхĕпе пĕрле юрласа, ташласа савăнатпăр тата çынсен кăмăлне те уçатпăр. Мăшăр ответлă выранта пуçлăх пулса ĕçлет пулсан та, хăйне мăнпа хумать. Сцена çине гитарăпа е хуткупăспа тухса пĕрле юрăсем шарантаратпăр. Çавăнпа ăна пирĕн спектакльте туй пуçĕн рольне шанса панă.

Фольклор ушкăнĕ юрласа ташланине пленка çине ӳкерсе илнĕ ĕмĕр асăнмалăх, савăнмалăх, хаклă парне пулĕ. Хамăр ватăлсан ачасем хăйсен ашшĕ-амăшĕсене пăхса вĕсен талăнчĕсемпе савăнĕç.

Пирĕн хĕрача Даша та концерта хутшăнать. Вăл çиччĕмĕш класра вĕренет, тăрăшуллă, «4», «5» палласемпе ĕлкĕрсе ырать. Ташлине хăй ăсталаса ăна Аня Егоровăпа тăрăшса ташлаççĕ. Ахальтен мар Дашăна сăпайлăхĕпе хастарлăхне кура класс старостине суйланă.

Çак концерта Юля Филиппова хăйĕн хĕрĕпе Ольăпа пĕрле хутшăнать. Ольăпа Валерий Евгеньевсем «Атя карчăк утă çулма» юрра концертра питĕ пысăк хастарлăхпа юрлаççĕ. Тӳррипе каласан, эпир кашни юрăçа пĕрешкел итлеместпĕр, хăшпĕрне итлетĕн те часах манса каятăн, кусен юрри пумайлăха асра юлать. Вĕсем тарăн туйăмпа, чун-чĕрене хускатмалла юрлаççĕ. Итленĕçем итлес килет вĕсене. Юля «Дружба» ялхуçалăх кооперативĕнче повар-кассирта ĕçлет. Апатçимĕç пĕçерсе хатĕрлес ăсталăхĕпе пурне те тĕлĕнтерет. Валерий Евгеньев вара карчăк рольне питĕ ăста вылять. Аçтан кăна шутласа кăларать хăйĕн килĕшӳллĕ сăмахĕсене! Залра ларакансем унăн хăтланăвĕнчен хырăм тытсах кулаççĕ, артист пулмах çуралнă пуль çак çын, теççĕ.

Фольклор ушкăнне Аля Фомиряковапа унăн ывăлĕ Ваня, Люся Майоровапа Света хĕрĕ тата ыттисем те хутшăнаççĕ.

Пурте хăйсен ăсталăхĕпе, тăрăшулăхĕпе палăраççĕ. Чи çепĕç сасли вара пирĕн хушăра Любовь Петрова. Вăл хăйĕн сан-сăпачĕпе, çепĕç туйăмĕсемпе куракансене тыткăна илет. Туйра хĕр ролĕнче хăйĕн чĕкеç сассипе хĕр кавча кайнă чухнехи юрра пуçарсан, куракансенне куççуль кăларма пултарать. Çавăн пекех Маргарита Кондратьева «Напилась я до пьяна» юрра пысăк ăсталăхпа юрласа пачĕ.

Çак концерта хутшăнакансене тата куракансене те малалла та ырлăх-сывлăх сунатăп. Сар хĕвел вĕсемшĕн яланах çутаттăр.

1996 ç., раштав уйăхĕн 12-мĕшĕ

ЙЫХРАВ ХЫÇÇĂН ЙЫХРАВ

Хальхи вăхăтра пурте пурнăç йывăрри, укçа çитменни çине йăвантарса лăпланса лараççĕ. Такам çӳлтен илсе килсе парасса кĕтеççĕ пулĕ. Ĕлĕкхи самана иртсе кайрĕ, халĕ вара пурнăçĕ урăхланчĕ. Çавăнпа та çак пурнăçăн йывăрлăхĕсене хамăран тăрăшса ĕçлесе çĕнтересех пулать.

Пурнăç йывăр тесе килте ал усса ларма вăхăт çук Шоркка фольклор ушкăнĕн. Çынсем пирĕн ушкăнран тĕслĕх илччĕр. «Мĕнле кусен тӳлевсĕр концерт кăтартма çӳрес килет?» — теççĕ пулĕ хăшĕсем. Чун-чĕрери туйăм хушать, çамрăк ăрăна хамăран чăваш юрри-кĕввине мантарас килмест.

Ака, сăмахран, эпĕ кашни концертпа кайса килмессерен çынсене мĕнле савăнтарнине хаçат урлă пĕрмай çырса пĕлтер-

се тăтăм. Хамăр эпир мăшăрпа юрлама-ташлама юрататпăр та, хаçат çинче çырнă хаваслă статьясене те интересленсех вулатпăр. Ытти çынсем те çавах пуль тетĕп. Пĕрмай ĕçлеĕçле ывăнтарать, пурнăç пурнăçра савăнас та пулать. Хаçатри статьясенче эпĕ Шоркка фольклор ушкăнне хăйсем патне чĕнсе илме йыхрав яма ыйтнăччĕ. Халĕ йыхравсем килсех тăма пуçларĕç. Нумаях пулмасть Чăрăшкасси ялне («Искра» колхоза) çитсе килтĕмĕр. Ялĕ пысăк, урамĕсем вăрăм та сарлака. Пĕрчĕсем капăр, ялти культура çурчĕ те çутă, капмар. Концерт курма халăх йышлă пуçтарăнчĕ. Хамăран хаваслă та çепĕç камăллă юрăсемпе программăна пуçларăмăр. Хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ, чăваш юрри-кĕввине илтсенех чĕрере вăрттăн туйăмсем çуралаççĕ, хуйхи-суйхи манăçать, сăмаххисене итлесе ларсан, сиксе тăрса пĕрле юрласа ярас килет. Çавăнпах пулĕ залра ларакансем хушшинче концерт курма килнисем сцена çине хăпарма шутларĕç. Те пĕрле тăрса юрласшăн пулчĕç. Сцена çине сĕтел лартса апат-çимĕçпе, сăрапа хăналанса ĕçкĕ юррисем шăрантарнă чух пырса сăра ĕçме камăл тавакансем те пулчĕç. Чăнах та, купăс тăсса ярсан, такмаксем каласа ташланă чух, пĕр выранта чăтса ларма май çук. Хамăран концерт программине вĕçлесен, Чăрăшкасси ялĕн çыннисем пире тав сăмахĕ каласа ăсатрĕç.

Тепĕр эрнерен пирĕн фольклор ушкăнĕ Шупашкарти «Уяв» ансамбле кайса курма камăл турĕ. Çак экскурсие пирĕн клуб заведующийĕ В. А. Журавлев йĕркелерĕ. Малтан кайса килсе билет, автобус пирки калаçса татăлчĕ. Фольклор ушкăнĕ питĕ камăллă юлчĕ, «Уяв» ансамбльтен çĕнĕ юрă-кĕвĕсем вĕрентĕмĕр.

Тепĕр йыхрав вара кăршĕри Самуккасси ялĕнчен пулчĕ: тăван çĕршыв хĕтĕлевçин кунĕ ячĕпе концерт лартса пама ыйтса янă. Ырласа кĕтсе илчĕ чĕнĕве пирĕн ушкăн. Мĕнле-ха унта каймасан, эпĕ кавча кайнă чух çак ялта мана çăкăртăварпа Платоновсен çемйи кĕтсе илчĕ. Малтанах колхозра хула çыннисене çĕр парасшăн марччĕ. Çавна пула эпир Шоркка ялне лекрĕмĕр.

Автобусĕ килмерĕ пулин те, сыпсем нумай шутласа тăмарĕç. Трактор хыçне кăкарнă çуна çине улăм сарса вырнаçса лартăмăр. Пĕлтерĕсене вулана çыпсем клуба пухăнăпа. Вĕсене мĕнле кĕрентерĕн-ха?

Самуккасси ялне пырса кĕрсенех, тăрех пире кунта чăтăмсăр кĕтнине туйрăмăр. Урам варринчи çул тап-такăр, тракторпа хырса тасаттарнă. Клубĕ ăшă, таса, кăмакинне шуратса лартнă. Пукансем çитмен пирки вăрăм хăмаран саксем туса лартнă. Кунта ял старости питĕ тăрăшуллă пулни паларчĕ. Георгий Николаева ахальтен мар-тăр ял халăхĕ шанса суйланă. Çавăн пек тăрăшуллă çынпа пурăнма та çăмăлтарах ĕнтĕ самуккассисене. Питĕ тимлесе итлерĕç ял çыннисем пирĕн юрă-кĕвве. Икĕ сехет ытла тăсалчĕ концерт, ватти-вĕтти тата та юрласа пама ыйтрĕ. Питĕ камăллă юлчĕç вĕсем. Юлашкинчен пурте ура çине тăрса маттур, маттур! тесе кăшкăрса тав турĕç. Кайран пурте пĕрле такмаксем каласа чăваш ташшине ташларăмăр. Пире шута хурса килме ӳркенменшĕн тесе, курма килне çынсем кашнех хăна тума пĕрер кĕленче эрех, апат-çимĕç илсе килнĕ. Пурте чупкалаççĕ, хăйсем пеçĕрнĕ кукăль-çăмахне, капăкла-хăмлалла сăрине тутанса пăхма сĕнеççĕ. Ман шутпа, вĕсем те камăллă юлчĕç, эпир те камăллă кайрăмăр.

Кун пек йыхравсем пирĕн татах та нумай: Вăрнар, Муркаш районĕсене хăнана концертпа чĕнеççĕ. Районти культура пайне ертсе пыракансем пире пулăшса пырасса шансах тăратпăр. Хальхи вăхăтра пирĕн пек ушкăнсем концерт кăтартма çӳрес текенсем нумаях мар. Çавăнпа та пирĕн камăл-туйăмăрсене ан хуçăрах.

1997 ç., пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ

ТУСЛАХ ПЫТАР ЕМЕРЕ

Сăмахăма пуçличчен «Тăван ен» хаçатра ĕçлекенсене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Вĕсем Шорккари фольклор ушкăнĕ çинчен вулакансене тăтăшах пĕлтерсе тăраççĕ. Пурсăра та хамăр ушкăн ячĕпе ыксĕлми телей, вăрăм куçул, çирĕп сывлăх супатпăр. Сирĕн хаçатра район çыннисене тивĕçтерекçен хыпарсемпе статьясем тухса тăччăр, çырăнса плекенсен шучĕ ӳссех тăтăр.

Хăшĕсем Шоркка ялĕ ăçта вырнаçнине те пĕлмеççĕ пулĕ. Хаçат урлă вара ялне кăна мар, çак ялти фольклор ушкăнне те пĕлме пуçларĕç. Пĕррехинче, пирĕн ушкăна паллакан çын тĕл пулнă та: «Алла хаçат илсен тӳрех сирĕн ушкăн çинчен çырман-ши тесе вулама пуçлатăп. Сирĕн концерт питĕ килĕшрĕ те, çавăнпа яланах интересленетĕп», — терĕ.

Пире концертпа пыма чĕнекен ялсем чылай. Шел пулни те, йыхрав яракансем патне çитме çăмăл мар. Сăлтавĕ палла: е автобус çук, е бензин туянаймастпăр.

Ку хутĕнче пирĕн ушкăн Вăрмар районĕнчи Вăрманкас ялне çитсе килчĕ. Концерта Шорккари клуб заведующийĕн В. А. Журавлевăн мăшăрĕн, Шурăн, амăшĕн çуралнă кунне халалларăмăр. Вĕсем иккĕшĕ те фольклор ушкăнне юрлама çӳреççĕ. Ватлăхра хăйсен амăшне юрă-ташăпа килентерес терĕç. Хальхи вăхăтра телевиденипе тата радиопа укçа тӳлесе кăмăллана юрăсемпе тăванĕсене саламлама пулать-ха. Анчах эпир вырăна çитсе кĕреке-хăна юррисене шăрантарса савăнтарма шутларăмăр.

Журавлевсен ывăлĕ Илюш чăтăмсăрран кĕтрĕ çак куна: кукамăшне саламлама илемлĕ чечек çыххи хатĕрлерĕ, хăйĕн юратнă сăввине пăхмасăр калама вĕренчĕ. Юля хĕрĕ, Шупашкарта музыка шкулĕнче сĕрме купăспа калама вĕренекенскер, ватă çын кăмăлне çĕкленме пултарчĕ. Варвара Михайловна Евдокимова 75 çул тултарчĕ. Пирĕн ушкăн ăна асăнмалăх парнепе чысларĕ.

Хăйĕн ĕмĕрне вăл тăван совхозра ĕçлесе ирттернĕ. Çулĕсемпе çамрăках мар пулсан та, 90 çулхи аппăшне пăхса усрать. Ман шутпа, Варвара Михайловна пурнăçĕнче çак концерт пирвайхи пысăк уяв пулчĕ-тĕр.

Пирĕн юрăçсене итленĕ чух Варвара Михайловнăн икĕ куçĕнчен савăнăç куççулĕ йăр-йăр юхса анчĕ. Хаваслă туйăм куççульне курсан, унăн йăмăкĕ Федосия Михайловна: «Сирĕн концертăр питĕ кăмăла кайрĕ, килес çул хамăн çуралнă куна концертпа чĕнесшĕн. Кăмăлăма хуçмăр-и?, — терĕ. — Эпир кунта килессине ирпе те, каçпа та хамăрăн радиоузелпа пĕлтерчĕç. Çавăнпа килмен çын юлмарĕ пулĕ». Чăнах та, клубра пĕр пушă вырăн та çукчĕ. Вĕсен тăванĕсем пире питĕ тарават кĕтсе илчĕç, чăвашсен тутлă апачĕ-çимĕçĕне хăналарĕç. Хăйсен хăмлаллă та кăпăклă сăрипе сăйларĕç, кăпăшка та çемçе кукăль-çăмахпа хăналаса ячĕç.

Шоркка фольклор ушкăнĕ Патреккел халăх хорне мĕнле тарават кĕтсе илнине те каласа хăварас килет. Эпир вĕсене «Дружба» кооперативăн акатуйĕнче кĕтсе илме ĕмĕтленнĕччĕ, анчах ĕçне юрă уявĕ çав кун пулмарĕ. Çапах та Шоркка фольклор ушкăнĕ çухалса каймарĕ. «Айтăр, палăк умĕнче хамăр вăйпа кĕтсе илетпĕр», терĕç харăссăн пурте. Ирхине пĕлĕтлĕ тăнă çанталăк кăнтăрла хыççăн уяртрĕ. Хĕвел пăхса ярсан, кайăксем уçă сывлăшра хăйсен юррисене чĕвĕлтетме пуçларĕç.

Елĕкхи-авалхи йăлана шăçетри хăнасене эпир çăкăр-тăварпа кĕтсе илтĕмĕр. Çăкăрне хамăр ушкăнри Елизавета Кириллова пĕçерчĕ. Ун пек çăкăра эпĕ ĕмĕрте пĕрре куртăм пулĕ: хитре те çаврака кăпăшка шурă çăкăр, ун питне эрешлесе тырă пучаххисем хунă. Ват çынпăн мĕн чухлĕ талант: шкулта ачасене ăс-тăн панă, юрă çырса кĕвĕлет, тутлă çăкăр пĕçерет... Патреккелсеçе кĕтсе илме те ăнах шантăмăр. Çепеç чĕлхипе ăшă сăмахсем тупса пурне те хăй пĕçернĕ çăкăра тутаниса пăхма сĕнчĕ, кайран вĕри какай шӳрпи çиме чĕнчĕ. Кăпăшка кукăль пĕçерекенĕ Ю. И. Филиппова пулчĕ. Хăймалла кăпăкла сăра вĕретекенĕ — З. Г. Семенова.

Пĕр сăмахпа, Шоркка фольклор ушкăнĕн кашни артисчĕ активлăхне кăтартрĕ. Хăйсен вăйĕпе, никама шанмасăр Патреккел халăх хорне пысăк концерт кăтартса панăшăн хăна турĕç. Çавăнпа, Патреккел хĕрĕ пулнă май, хам ятран вĕсене пурне те тепĕр хут тав тăватăп. Малашне те хамăрăн ушкăнпа çирĕп утса ытти коллективсемпе хутшăнмалла пултăр.

1997 ç., çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕ

ХУРАНЛАХ ЯЛĔНЧЕ, УЯВРА

Сисмесĕрех кĕр уйăхĕсем çитрĕç. Уй-хирсем пушанчĕç. Вĕçен кайăксем те ăшă енне вĕçсе кайрĕç. Иртнĕ каçмалли кун эпир те кӳршĕ яла концертпа çитсе юрă-ташăпа савăнтарма шутларăмăр. Юрă-ташă кĕввийĕ камăн чĕрине çемçетмĕ, хитре-хитре хĕрĕсем камăн чунне илĕртмĕç. Хамăр кĕске ĕмĕрте юрласа-ташласа, чуна савăнтарса пуранар. Вара пурнăç татах вăрăмланĕ. Çавăнпа та Шоркка фольклор ушкăнĕнчен тĕслĕх илĕр. «Вăхăт çук, пыраймастпăр», — темеççĕ вĕсем. Чĕппĕ çĕре çитсе килме тăрăшаççĕ.

Çĕнĕ юрă, ташă çуралать вĕсен чĕрисенче. Кашни концертах урăх юрăсемпе халăха савăнтараççĕ. Юрă кĕвĕ çуралмасăр майĕ çук. Шоркkари фольклор ушкăнĕн ертӳçи сăпайлă та илемлĕ çамрăк, яштака качча — Николай Сергеевич Сусарин. Хăйĕн пĕтĕм вăй-халне шеллемесĕр вĕрентет вăл шире. Юрă-ташă вăрттăнлăхне алла илме пулăшать. Концерт вăхăтĕнче мĕнле хусканусемпе куракансене тытăна имеллине те ăнлантарать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл «Уяв» ушкăнĕнче хут купăспа выляса чăваш халăхне хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерет.

Клуба пухăннă çынсем умĕнче малтан Çатра-Хочехматри шкул директорĕ Н. В. Дмитриева сăмах каларĕ. Ачисем мĕнле вĕреннине ашшĕ-амăшĕсене ăнлантарса пачĕ. Кайран вара Çатра-Хочехмат ял пуçлăхĕ, Хурăнлăх клуб заведующийĕ, ял старости хăйсен ялĕнчи Платоновсен çемйинне ылтăн туйпа саламларĕç. Ăшă та илĕртӳллĕ сăмахсем каласа вăрăм ĕмĕр сунчĕç. Вара эпир вĕсене халалласа, ял халăхне уяв ячĕпе саламласа, хамăран çепĕс юрăсене парнелерĕмĕр. Тавăллăн алă çупрĕç ял çыннисем. Нумайччен киле каймасăр. «Татах юрлăр ха, итленĕçемĕн итлес килет», — терĕç. Юлашкинчен ăшă сăмахсем каласа татах килсе çӳреме ыйтрĕç. Вĕри чейпе, ăшă, çуллă кукăльсемпе хăна туса ячĕç.

1997 ç., чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕ

ШОРККАСЕМ ШĂМĂШРА ШĂРАНТАРЧĔÇ

«Хĕвел анчĕ, каç та пулчĕ — урхамах сисет.
Шорккари фольклор ушкăнне автобус кĕтет».

Ыхравне тахçанах янăччĕ, анчах шухăшланă ĕмĕт пурнăçланаймасть тепĕр чух. Хальхинче вара В. Журавлев клуб заведующийĕ районти культура пайĕн пуçлăхĕпе Л. Фомина каласшăн пулăшрĕ. Вăл пире пулăшу аллине хаваспах пачĕ. Шăмăш ял администрацине кĕрекен Янашкасси ялне çуле çывăх мар. Каç енне сулăнсан фольклор ушкăнĕ хăвăрт пуçтарăнса çула тухрĕ. Юрласа, кулса, шӳтлесе автобус водителĕ Н. Кириллов хăвăртах яла илсе çитерчĕ. Сăмах май каласан, Илья Семенович пире час-часах концерта илсе çӳрет. Вăл культура пайĕнче шоферсенчен чи нумай çул ĕçлекенни. 1967 çултанпа тăрăшать.

Пирĕн ушкăна Е. Павлова клуб заведующийĕ, ял старости В. Михайлов кĕтсе илчĕç. Ял халăхне сывлăх сунса, хамăр юррăмăрсене пуçларăмăр. Малтан ушкăнри Е. Кириллова çырса кĕвĕленĕ юрăсене юрларăмăр. Унăн кăçал хорта юрлама пуçланă 50 çул пулать. Çавăн пек ăслă, пултаруллă та талантлă хĕрарăма чыс та мухтав. Пирĕн фольклор ушкăнне ăна малалла та пысăк ăнăçу сунать. Ушкăна Н. Сусарин ертсе пырать. Пединститутра, музыка факультетĕнче юлашки курсĕнче вĕренекенскер ӳркенмест, пултаруллă кайчă. «Уяв» ансамбльте купăспа тата баянпа вылять. Пирĕн ушкăн та

«Уявран» юласшăн мар. Ун репертуарĕнчи юрăсене юрласа çынсен кăмăлне хăпартатпăр. Тĕрлĕ шӳтлĕ юрăпа, юптарупа култаратпăр.

Хальхинче сцена çине Ишлей кирпĕч завочĕн директорĕ Н. Платонов гитарăпа тухрĕ. Вăл çак ялта пурăнакан чи хитре саслă çынна ăмăртса юрлама сĕнчĕ. Сцена çине яштака хĕрарăм тухрĕ. Иккĕшĕ такмаксем калама пуçларĕç. Пĕр-пĕрне паранмарĕç. Зоя Чумакова совхозра газооператорта ĕçлет. Çепĕç сассине хăйсен ялĕнчи çынсене савăнтарчĕ. Юлашкинчен фольклор ушкăнĕ ăна асăнмалăх парне пачĕ. Концерт хыççăн ял старости Виктор Михайлович пирĕн ушкăна тав сăмахĕ каларĕ. Малалла та килсе çӳреме ыйтрĕ. Кайран вара клуб заведующийĕ Е. Павлова хăйсен ялĕ пирки каласа кăтартрĕ. Çепĕç калаçу хыççăн сĕтел хушшинне чĕнчĕç. Фольклор ушкăнне курма килнĕ Шоркка ял халăхĕ тав кĕнеки çине çапла çырчĕ:

«Концертри юрăсем пире питĕ килĕшрĕç. Ĕçкĕ-çикĕ юррисем чылай пулчĕç. Питĕ пысăк тав сире ĕç вăхăтне хĕрхенмесĕр, пире вăй-хăват парса хăварнăшăн. Çирĕп сывлăх, вăрăм кунçул сунатпăр, çемçе çăкăр ан татăлтăр, юман пек çирĕп пулăр, çăка çулçи пек çавра çӳрĕр. Пур ялсене те кайса савăнтарăр».

1998 ç., çу уйăхĕн 26-мĕшĕ.

Н. А. Сиренев статйисем

ҪЁНТЕРӲШЁН ШАЛ ТА ШЕЛ МАР

Предприяти ӗҫлеме пуҫӑннӑ куна халалласа Ишлейри кирпӗч заводӗнче ӗҫлекенсем кашни çулах футбол турнирӗ йӗркелеççӗ, куҫса çӳрекен кубокшӑн кӗрешеççӗ. Кӑҫал çак турнирта завод 38 çул тултарнине халалларӗç. Пӗр команда йышӗнче кирпӗч çапакансем, тепринче кирпӗч хатӗрлекенсем вылярӗç. Курас кӑмӑллисем те чылайӑн пуханнӑ.

Рабочисем ӗç хыççӑн вылярӗç пулин те, вӑйӑ çивӗч кӗрешӳре интереслӗ иртрӗ. Пӗрремӗш мечӗке кирпӗч хӗртекенсен командинче вылякан Иван Степанов тапса кӗртрӗ.

Вӑйӑ тӗп вӑхӑчӗ пӗр пек шутпа вӗçленчӗ. Ӑмӑртӑвӑн тӗп судйин К. Крыловӑн çӗнтерӳçӗне палӑртма хушма икӗ тайм пама тиврӗ. Чи лайӑх выляканченсен пӗри, заводра моторист пулса ӗҫлекен В. Васильев çӗнтерӳ мечӗкне тапса кӗртрӗ. Çапла вара 4—3 шутпа мала тухса тӗп парнене кирпӗч çапакансен команди çӗнсе илчӗ.

Çакна палӑртма кӑмӑллӑ: предприяти ертӳçисем те çак мероприятирен аякра тӑмарӗç. Ыттисемпе пӗрле площадкӑра завод директорӗ Н. А. Платонов тата производство начальникӗ П. В. Охотин чупрӗç, çӗнтерӳçӗшӗн тӑрӑшрӗç.

Интереслӗ вӑйӑ вӑхӑтӗнче пӗр шутласан кулӑшла, тепре шутласан пӑшӑрханмалла самант та пулса иртрӗ. Хыта тапса янӑ мечӗк хапхара тӑракан М. Сильвестрова питӗнчен лекнӗ кӑна мар, пӗр шӑлпе катса та пӑрахнӑ. Хӑюллӑ футболист кун хыççӑн та выляма пӑрахмарӗ пулин те, унӑн килпе катӑк шӑлпа тавранмалла пулчӗ.

Заводра футбол енӗпе тепӗр вӑйӑ строительсен кунӗ ячӗпе иртерме палӑртнӑ. Ун чухне хаклӑ парнешӗн ветерансемпе çамраксем вӑй виçӗç.

1996 ç., çӗртме уйӑхӗн 1-мӗшӗ.

ВИҪҪЁМЁШ ХУТ

Ишлейри кирпӗч заводӗнче каратэ мелӗпе кӗрешсе мала тухассишӗн виççёмёш турнир ирттерчӗç. Малтанах завод директорӗ Н. А. Платонов ӑмӑртӑва хутшӑнакансемпе тренировка ирттерчӗ, кӗскен каратэ историйӗпе паллаштарчӗ. Кӗрешӗвӗн çак меслечӗ пин çул каялла Японире аталанма пуçланӑ иккен.

Николай Алексеевич хӑйӗн тӗп ӗçӗ хыççӑн Çатра Хочехмат шкулӗнче ачасене каратэне вӗрентет. Вӑл хӑй хӗрлӗ пиçиххи тивӗçнӗ. Тренировкӑра Н. Платонов тапӑнасран сыхланмалли мелсене кӑтартрӗ.

Н. В. Охотин, К. П. Крылов тата Н. В. Смирнов судьясем сигнал парсан çивӗч кӗрешӳ пуçланчӗ. Çамраксем хушшинче чемпион ятне Рудольф Макаров çӗнсе илчӗ. Вӑл Ишлейри вӑтам шкулта 10-мӗш класра вӗренет. Каникул вӑхӑтенче кирпӗч заводӗнче ӗçлет.

Арçынсем хушшинче чи вӑйлисем Владимир Алексеев пулчӗ. Вӑл водитель, кирпӗч турттарать.

Хӗрсем хушшинче те ӑмӑрту çивӗч иртрӗ. Финала Ирина Абаткинапа Марина Толстова тухрӗç. Вӗсен хушшинчи кӗрешӳ тӗп вӑхӑтра та, хушса панинче те никам çӗнтерейменнипе вӗçленчӗ. Çавӑнпа судьясем иккӗшне те пӗрремӗш вырӑн парас тесе йышӑнчӗç.

Çӗнтерӳçӗсене пурне те хаклӑ парнесем парса чысларӗç. Ӑмӑрту завод стадионӗнче иртрӗ. Ӑна курма пынисем кӑмӑллӑ юлчӗç.

1996 ç., утӑ уйӑхӗн 9-мӗшӗ

ЛАЙАХ ЕҪЛЕНЕШЕН — ВЕЛОСИПЕД

Ишлейри ватам шкулта вĕренекенсем каникул вăхăтне усăсăр ирттермерĕç. Хăшĕсем ялхуçалăхĕнче, теприсем шкулти пахчаçимĕç йăранĕсем çинче вăй хучĕç. Нумайăшĕ вара Ишлейри кирпĕч заводĕнче тăрăшма кăмăл турĕ. Шел пулин те, ĕçлеме килекенсене завод дирекцийĕн конкурс тăрăх 3—4 ачаран пĕрне çеç йышăнма тиврĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май, завод администрацийĕпе профсоюз комитечĕ уйрăмах тăрăшса ĕçленĕ 6 ачана премипарса савăнтарчĕç. Август уйăхĕнче типтерлĕ ĕçленĕшĕн Коля Никифоровпа Вова Ефимова 500-шер пин тенкĕ укçа парса чыс турĕç. Миша Данилова, Ира Абакинана, Толя Кириллова, Коля Смирнова 200—250-шар пин тенкĕ тивĕçнĕ. Укçине вара вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа ирттернĕ линейкăра завод директорĕ хăй пачĕ. Ачасене лайăх ĕçлеме хăнăхтарса тĕрĕс воспитани панăшăн Николай Алексеевич шкул директорне Л. П. Филлипса та парнесĕр хăвармарĕ тата шкула çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлеме стройматериалсемпе пулăшрĕ.

Ачасемпе кунта тăрăшакан рабочисем хастар ĕçленĕ пирки кăçал завод 2,5 млн. штук кирпĕч калăпласа кăларчĕ. Ку кăтарту пĕлтĕрхинчен 200 пин штук ытларах. Ĕçре хăйсен пултарулăхĕпе кăмака юсакан И. П. Пардасов тата кирпĕч майлаштарса хуракан Л. В. Дмитриева савăнтарчĕç. Çавăнпа Пантелеймон Илларионовича Италирен илсе килнĕ велосипед парнелерĕç.

Завод директорĕ Н. А. Платонов калана тăрăх, кун пек велосипед пирĕн республикăра урăх çук. Вăл 18 передачăллă. Камера шăтсан та саплама кирлĕ мар, мĕншĕн тесен ăшне çыпăçтаракан шĕвек янă. Çав шĕвекĕ шăтăка шыраса тупса шал енчен камерăна кăлармасăрах сапласа хурать. Лайăх ĕçлекенсем валли татах хаклă парнесем пур заводăн. Вĕсем хăйсен хуçисене сезон вĕçленсен тупĕç.

1996 ç., авăн уйăхĕн 5-мĕшĕ.

КАРАТЭ — ИККАССИНЧЕ

Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче Иккасси шкулĕнче каратэ секцийĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çăмăл мар ĕçе Чăваш Республикинчи каратэ мелĕпе кĕрешекенсен Федерацийĕн пуçлăхĕ В. Ефремов ыйтнипе çак шкултан вĕренсе тухнă, хĕрлĕ шăршхинпе тивĕçнĕ Н. А. Платонов ертсе пыма килĕшнĕ.

Пĕрремĕш тренировкăсенех ачасем йышлăн пухăннă. Çавăнпа Николай Алексеевич ăсталăх пухма кăмăл тăвакансене конкурс йĕркипе шкулта мĕнле вĕреннине шута илсе, ваттисемпе е хăйсенчен кĕçĕнреххисемпе сăпайлă тытакансене çеç суйласа илнĕ. Çак ĕçе тума шкул директорĕ А. А. Печников та пулăшать. Палла ĕнтĕ, Анатолий Александровичăн çеç мар, пирĕн пурин те хăйсене тытма пултарайман ачасене каратэ меслечĕпе кĕрешме вĕрентес килмест. Ишлейри кирпĕч заводĕнче директорта вăй хуракан Н. А. Платонов, вăхăчĕ хĕсĕк пулин те, ачасемпе тренировкăсем ирттерме вăхăт тупать.

— Эпĕ хам та ялта ӳснĕ. Талантсем нумай унта, пулас палла спортсменсем, музыкантсем, композиторсем. Анчах вĕсене пĕчĕкрен вĕрентсе пымасан, çав ылтăн вăхăта сая ярсан кая юлать, ирттĕ таншăра хăваласа çитме питĕ хĕн, — тет вăл.

Унăн самахĕсемпе килĕшмесĕр май çук. Хаваслă та интереслĕ ирттеççĕ занятисем. Пайтах тар юхать команда капитанĕн Костя Николаевăн. Хĕрсем те вĕренеççĕ кунта ансат меслетсемпе хÿтĕлĕнме. Чи хастаррисем вара çĕнĕ çулта Шупашкар хулин уçă чемпионатне кайĕç. Анăçу вĕсене.

1996 ç., юпа уйăхĕн 17-мĕшĕ.

Н. А. ПЛАТОНОВ тренер.

КАМ — ШКУЛА, КАМ — КИЛЕ

Сентябрĕн 1-мĕшĕ ачасемпе вĕрентекенсемшĕн çеç мар, ашшĕ-амăшĕсемшĕн те паллăран та паллă кун. Çак куна нимле пысăк пуçлăх та, йывăр самант сиксе тухсан та куçарма е сиктерсе хăварма та тăрăшман. Ĕмĕрех уяв пултăр çак кун.

Ишлей шкулĕнче те савăнăçлă линейкăна чылай çын пухăнче. Малтанах шкул директорĕ Л. П. Филлипс сăмах илчĕ. Вăл шкула пурĕ 762 вĕренекен килнине пĕлтерчĕ. Пĕлтĕр ылтăн медальпе Владимир Серебряковпа Инна Варламова шкул пĕтернĕ. Кăçал вара медаль илме ултă ача тăрăшнă. Унтан вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа райадминистраци пуçлăхĕн çумĕ А. А. Константинов тата район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ З. Ю. Константинова саламларĕç, парне пачĕç.

Çуллахи каникул вăхăтĕнче çак шкулта вĕренекен 7 ача Ишлейри кирпĕч заводĕнче хастар ĕçленĕ. Вĕсене пурне те кирпĕч завочĕн директорĕ Н. А. Платонов август уйăхĕшĕн 230—320 пинлĕр тенкĕ премипа парса хавхалантарчĕ.

Н. В. Смирновпа А. Н.Кириллов вара иккĕмĕш çул кирпĕч калăпланă çĕрте тăрăшнă. Вĕсем Хисеп грамотине тивĕçрĕç тата ачасене кирпĕч заводĕнчи çĕвĕ цехĕнче çĕленĕ япаласем парса чысларĕç. Вĕсен класс руководителĕ Е. В. Кириллова пултарулла тата лайăх кадрсем хатĕрленĕшĕн завод администрацийĕ ячĕпе хакла парнене тата Хисеп грамотине тивĕçрĕ.

Фермер хуçалăхĕсен «Новинка» ассоциацийĕн ертӳçи Л. Я. Гаврилов çулла хăй патĕнче ĕçленĕ шкул ачисене сехет тата пĕчĕк радиоприемник парса ӳлĕмрен те лайăх ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен, савăнăçлă линейка аван иртрĕ. Анчах пер пĕчĕк япала чĕрене ыраттарнине çырса хăвараймасан статья вĕçленмен пек туйăнать. Çавăнпа та вулакана çакна та пĕлтерсе хăвармалла. 1—4-мĕш классем парта хушшине вĕренме ларчĕç пулсан, ыттисем сăра типеймен пирки пӳлĕмсене кĕреймерĕç.

Шефсем ĕçĕсене кая юлса пуçланă иккен. Вереннисем килнĕ ачасем шкул коридорĕ тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳресен, пуçĕсене усса килелле саланчĕç.

1997 ç., авăн уйăхĕн 2-мĕшĕ.

ФУТБОЛИСТСЕН ТУРНИРĔНЧЕ

33 çултан иртнĕ арçынсенчен тăракан футболистсен командисем хушшинчи республика чемпионачĕ хĕрӳллĕ тапхăра кĕчĕ.

Икĕ зонăра пурĕ 10 команда вăй виçрĕ. Пĕрремĕш çаврăм хыççăн 8 команда юлчĕ. Ун хыççăн олимп системипе пĕр-пĕринпе вылярĕç. Кам выляса ярать, вăл турниртан тухса ӳкет. Чĕрĕк финал хыççăн тăватă команда çеç малалла ăмăртать. Вĕсем — Шупашкар хулинчи «Сталь», «Энергия», «Честр», «Керамика».

«Керамика» команда керамблок кăларакан заводшăн вылять. Унăн капитанĕ — О. Н. Львов. Заводра телефон юсакан ăстаçа пулса тăрăшать. Çак команда республика чемпионатĕнче пĕрремĕш хут вылять пулсан та Олег Николаевич тăрăшипе вĕсем Сĕнтĕрвăрринчи футболистсенчен 3:1 шутпа выляса илсе çурма финала тухрĕç. «Керамикăшăн» пирĕн ентеш — Ишлейри кирпĕч завочĕн директорĕ Н. А. Платонов та вылять. Иртнĕ вăйăра «Керамика» хирĕç вылякансен хăпхине тапса кĕртнĕ икĕ мечĕкне Николай Алексеевич меллĕ тапса панипе усă курса кĕртнĕ. Шăпа янă хыççăн «Керамика» тепĕр вăйăра республикăри чи вăйлă командăпа — «Энергипе» вăй виçмелле.

Тепĕр çул Кӳкеçпе Ишлейри командăсем пĕрле пулса хамăр районтан вăйлă команда хатĕрлесе республика чемпионатĕнче вăй виçесшĕн. Апла пулсан, ăнăçу вĕсене.

1997 ç., авăн уйăхĕн 4-мĕшĕ.

КАРАТЭ, КИРПĔЧ...

Иккассинчи шкулта вĕренекенсем каратэ мелĕпе кĕрешмелли секцисене тренировкăсене çӳреме пуçларĕç. Занятисем уроксем пĕтсен пуçланаççĕ. Арçын ачасем çеç мар, хĕрачасем те хăнаслансах кĕрешме вĕренесшĕн.

Иккассинче каратэ секцийĕ ĕçлеме пуçланă иккĕмĕш çул ĕнтĕ. Ăна йĕркелесе яракан — Ишлейри кирпĕч завочĕн директорĕ Н. А. Платонов.

Хăй калана тăрăх, пушă вăхăт сахалтарах пирки çак çул каратэ тренерĕ пулса занятисем ирттересшĕн пулман вăл. Анчах пĕрремĕш тренировкăрах шкул ачисем йышлăн пухăнă, пурин те хĕç-пăшалсăр мелле хӳтĕленме тата аскăнчăка çĕнтерме вĕренес килет-ске. Тата ашшĕ-амăшĕсем те Николай Алексеевича çак ĕçе малалла ертсе пыма пуç тайсах ыйтнă.

Паллах, çамăл мар кирпĕч завочĕн директорĕ пулса ĕçлеме тата каратэпе тренировкăсем ирттерме. Сăмах май каласан, кирпĕч завочĕн коллективĕ кăçал 2 миллион та 669 пин штук кирпĕч çапса пĕлтĕрхинчен 166 пин кирпĕч пумайрах калăплана. Çĕнĕ çулччен вĕсен 1 миллион та 300 пин штук кирпĕч хĕртсе кăларса халăха сутасшăн.

Çавăн пек çитĕнӳсем тума паянхи рынок вăхăтĕнче коллектившăн çамăл ĕç мар. Пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесен, унтан ытла пĕр-пĕринпе кăмăлласа тата юлташсене хисеплесе вăй хурсан çеç ĕçри кăтартусем пысăк шайра пулма пултараççĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. В. Данилов «Таван ен» хаçат урлă Ишлейри кирпĕч завочĕн коллективне ĕçри çитĕнӳсемпе саламларĕ.

1997 ç., авăн уйăхĕн 27-мĕшĕ.

ШКУЛА — «ТАВАН ЕН»

Хăшĕ-пĕрисем шкул пĕтернĕ хыççăнах ун çинчен аса та илмеççĕ, хутран-ситрен çеç пыркаласа каяççĕ. Пулăшасси çинчен шухăшра та çук вĕсен. Хальхи пасар саманинче шкулăн проблемăсем пуç тӳпи таранах.

Çавна шута илсе Иккассинчи шкултан вĕренсе тухнă, халĕ Ишлей кирпĕч завочĕн директорĕнче ĕçлекен Н. А. Платонов хăйĕн укçипе асăннă вĕренӳ заведенине çур çуллăха «Таван ен» хаçата пĕр экземпляр çыраншă пачĕ. Ку çеç те мар, вăл çак шкултах иккĕмĕш çул каратэ секцине ертсе пырать. Николай Алексеевич каратэ тренерĕ пулса тăваттăмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Яшсемпе хĕрсем кĕрешмелли мелсене йышлăн хăпăхаççĕ.

1997 ç., раштавăн 16-мĕшĕ.

ЁНЕ ИЛМЕ ТЕ ÇИТЕТ

Ишлейри кирпёч завочё 1997 çула лайăх кăтартусемпе вёçлени çинчен «Тăван енён» малтанхи номерёсенче вуласа пёлнёччё. Çак заводра аван ёçлеççё çеç мар, кунта тăрăшакансене ёç укçи кашни уйăхрах парса пынă. Хăш-пёр предприятисенче укçа выраннe продукцине саплаштарса пынă, тепёр çёрте çулталăкшăн алла укçа тытса курман пулсан, кунта пачах урăхла, çёнё укçапа та паллашма ёлкёрнё. Иртнё çулхи финанс балансне пётёмлетсен вара завод администрацийёпе профком «14-мёш ёç укçи» валеçнё.

«14-мёш ёç укçине» маларах чылай организаци-предприятире, ял хуçалăхёнче çулталăк вёçленсен кашни çынах, паллах, ёç дисциплинине пăхăнса тăрăшакансем тивёçнё.

Кирпёч завочё вара кунта çулталăкран ытларах ёçлекенсене панă. Калăпăр, 1—3 çул ёçлесен çулталăкри ёç укçинчен 10%, 3—5 çул — 15%, 15 çултан ытларах ёçлекенсен 40% таран хушăннă. Тёслёхрен, И. П. Ефимов шофер 25 çул заводра вăй хурать. Иван Петрович вара алла пёр харăсах кивё укçа па 2 миллион та 300 пин тенкё илнё. Паллах, ку укçапа пёчёк янала мар, çемçе сётел-пукан е ёне туянма пулать.

Çаванпа та завода ёçе вырнаçас кăмăллисен йышё пысăк. Завод директорё Н. А. Платонов калана тăрăх, вёсене пурнe те сезон пуçланас умён апрелён 27-мёшёнче конкурс тăрăх çеç ёçе йышăнаççё. Пёр вырăна, аслă пёлу паракан верену заведенине кёнё пек, 3—4 çын талпăнать. Кăна эпир хамăр та куртăмăр.

1998 ç., нарăс уйăхён 12-мёшё.

ВАЙА ТАТСА ПАРЁ

Ишлейри кирпёч заводёнче вăй хуракансем спортпа питё тусла. Тёрлё енлё спорт ăмăртăвёсемпе пёрлех вёсем футбола выляма та питё юратаççё. Кашни эрнекун ёç хыççăн мечёк хăваласпё. М. Абаткин водитель çапла калать: «Футбол вăл наркотик пекех, пёрре вылясан — пăрахма май çук. Çав куна чăтăмсăрлăн кётетпёр».

Иртнё эрнекун та водительсен команди заводăн ытти ёçченсенчен йёркеленё командипе тёл пулчё. Малтанхи вăйăра водительсем вăйлăрахчи палăрчё пулсан, хальхинче пёрлештернё команда тăрăшарах вылярё. Пёрремёш мечёке авто погрузчик водителё В. Кириллов тапса кёртрё. Вăйă хёрăленсе пычё. Хăш-пёр тёлте çурхи шыв тухнă пулсан та, футболистсемшён вăл пысăк чăрмав пулмарё. Курма килнё çынсем те хăйсем алă çупса, хыттăн кăшкăрса спортсменсене хавхалантарчёç. Пăхатăн та, завод командисем мар, Раççей чемпионачё иртет пулё тетён. Иккёмёш мечёке К. Пантелеев водитель кёртрё. Вёсен хапхаçи В. Дмитриев тăрăшса вылярё пулсан та, иккёмёш тайăмра ăна йывăр килчё. Пёрлештернё командăн футболисчё В. Федотов водительсен хапхине 4 мечёк тапса кёртме пултарчё. Икё мечёке кирпёч завочён директорё Н. А. Платонов тапса кёртрё. Штраф площадкипе çитиччепех Николай Алексеевич хыттăн тапрё, мечёк юпан çўлти кётесне çапăнса хапхана кёрсе выртрё. Тёлпулу 6:3 шутпа вёçленчё. Тепёр хапхаçа В. Васильев моторист хăюлăхла палăрчё. Нумай самантсенче вăл мечёке аяккалла спрсе яма пултарчё.

Тăрăшса выляна хыççăн спортсменсем пумай пулмасть туса пётернё çёнё мунчана юман, хурăн милёкёсемпе çапăнма васкарёç.

Апла пулсан, Çёнтерў кунёнче выляма палăртнă юлташла тёлпулура «Ишлейское» ялхуçалăх предприятийёнчи футболистсенчен Ишлейри кирпёч завочён команди выляса илме пултарасси çинчен шантарсах калама пулать. Тен, эпир калана пек те пулмё. Çаванпа та тупăшăва вăйă çеç татса парё.

1998 ç., ака уйăхён 21-мёшё.

ПЁРРЕМЁШ СУЙЛАВÇА

Паспорт яланах çумра пулмалла иккен. Н. А. Платонов суйлавçа суйлав округне срокчен сасăлама çитнё. Анчах та паспорт илсе килмен пирки ăна алла бюллетень паман. Çаванпа вăл тепёр кунне çеç сасăланă.

Çакна палăртса хăварма кăмăллă. Комисси секретарё Л. Г. Чайникова суйлавçăсрне ăшшăн кётсе илет. Хăйён ёçне лайăх пурнăçласа пырать. Комисси председателё Л. П. Пахомов калана тăрăх, Альбина Георгиевна суйлав кампанийёсене иттерекен специалистсенчен чи хастарри, опычё те çителёклё.

Çаванпа 48-мёш Кўкеç округёнче суйлав саккуна пăхăнса, тёрёс иртессе шантарсах каламалла.

1998 ç., утă уйăхён 2-мёшё.

ЭПИДЕМИ ХĂРУШЛĂХĔ ПУР

Пирĕн районта кĕçех халиччен пулман хăруша япала сикçе тухма пултарать. Ана эпидеми теççĕ, чăвашла каласан пĕрпĕрне ерекен, хăвăрт сарăлакан чир. Мĕншĕн? Ишлейри Совет урамĕнчи 5-мĕш çуртра общежити вырнаçнă. Унта пурăнакан çынсем çăвăнна, чашăк-тирĕк çуна тата туалетри шыв тăрех — урам тăрăх анлă юханшыв пек юхать. Пĕчĕк ачасем хаçатран кимĕсем туса çав шывра иртен пуçласа каçчен выляççĕ. Пĕлмеççĕ пĕчĕк пепкесем мĕнле хăруша чир патне илсе пыма пултарнине çак вăйă?

Санэпидемнадзор центрĕн яваплă çынниçем пĕлеççĕ кун пирки. Мур тăвакан шыв пĕрремĕш кун юхмасть, иккĕмĕш уйăха кайрĕ ĕнтĕ.

Тен, çын каланине пуçлăхсем хăлхана кĕртесшĕн мар. Анчах «Тăван ен» хаçатра çырнă статья вĕсен хытă хăлхисене витетех пулĕ тесе шутлатпăр.

1998 ç., утă уйăхĕн 30-мĕшĕ.

ПУЛАСЛĂХĔ ВĔСЕН ПЫСĂК

Шорккари «Туслăх» фольклор ушкăнĕ çинчен Шупашкар районĕнче илтмен çын та çук пулĕ, анчах çак ялтах çамрăксен ансамблĕ пурри çинчен халлĕхе пĕлсех каймаççĕ. Кăçал çеç йĕркеленнĕ пулин те, вĕсем ялта темиçе концерт лартма ĕлкĕрнĕ. Чи интересли — уява клубра мар, уçă сывлăшра, урамра йĕркелеççĕ. Çавăнпа Н. А. Платонов ятарласа хăйсен килĕ умĕнче сцена туса панă, сутă кĕртнĕ, магнитофон ĕçлеттерме розетка та пур. Николай Алексеевич Ишлейри кирпĕч заводĕнче директор пулса ĕçлет пулин те, çамрăксен пултарулăх коллективне ертсе пыма вăхăт тупать.

Нумаях пулмасть вĕсем концертпа Колешша ялне çитсе килчĕç. Клуб заведующийĕ В. Н. Николаев хăнасем çинчен чылай ыра сăмах каларĕ. «Вĕсенчен нумайăшĕ таланта аталантарса пырсан, чăваш çăлтăрĕ пулĕ», — тесе пĕлтерчĕ. Анжеликăпа Рита Павловасене, Ленăпа Наташа Александровасене уйрăмах палăртса хăварчĕ вăл.

Ĕнер çамрăксен ансамблĕ Саша Платонов çартан отпуска килнĕ ятпа пысăк концерт кăтартрĕ. Ялапхи пекех халăх йышлă пуханчĕ, тăваллăн алă çупса тав турĕ яшсемпе хĕрсене. Çирĕплетсе калама пулать: пуласлăхĕ вĕсен пысăк. Ахальтен мар ансамблĕн ячĕ те — «Нухрат çăлтăрĕсем».

1998 ç., çурла уйăхĕн 22-мĕшĕ.

ХАММУРАПИ — ЦАРЬ ВАВИЛОНА

(продолжение, начало на стр. 34)

— Если человек будет уведен в плен и в его доме нет средств для пропитания, и поэтому его жена войдет в дом другого и родит детей, а потом ее муж вернется и достигнет своей общины, то эта женщина должна вернуться к своему первому супругу; дети следуют за их отцами.

— Если врач срастит сломанную кость человеку или вылечит болезненную опухоль, то больной должен отдать врачу 5 сиклей серебра (1 сикль — 8,4 г.).

— Если бык человека бодлив и соседи заявят ему, что он бодлив, а тот не притупит ему рогов и не спутает своего быка и этот бык забодает сына человека и причинит ему смерть, то он должен отдать 1/2 мины серебра (1 мина — 60 сиклей).

Другим древнейшим правилом жития является законы Ману, который жил в древней Индии приблизительно в 1 в. до н. э. По преданию мифический Ману — родоначальник арийцев.

Исполнение законов Ману согласно обычаев и регилий считалось добродетельно. Вот некоторые выдержки из них:

— Брахман не должен вследствие гнева поднимать палки на другого человека, ни бить кого-либо, кроме сына или ученика, последних двух он может бить с целью их исправления.

— Наказание – великая сила. Оно губит царя, который уклоняется от своего долга.

— Царь должен конфисковать все имущество и ссылать тех порочных чиновников, которые позволяют себе брать деньги от просителей. Ибо слуги, для защиты народа обычно становятся хитрецами, которые пытаются завладеть собственностью других.

— По надлежащему обсуждению царь в своем государстве всегда должен назначать пошлины так, чтобы и он сам, и промышленник от своих занятий получали доход.

— Царь, тщательно рассмотрев дело, должен быть и строгим, и добрым; ибо царь, и строгий и добрый, весьма уважается.

— Закон губит, когда его нарушают, закон охраняет, когда его соблюдают, поэтому закон нельзя нарушать, чтобы нарушенный закон не покарал нас;

Царь должен очень стараться наказывать воров; ибо он

когда наказывает воров, его слава увеличивается и его царство процветает.

— День и ночь женщины должны находиться в зависимости от мужчин своего семейства. Отец охраняет ее в детстве, муж — в молодости, сыновья — в старости.

— Даже если человек взял девушку законным образом, он может бросить ее, если она с пороком, обесчещена или отдана ему обманом.

— За преступные деяния, совершенные телом, человек становится в будущем рождении чем-либо неодушевленным; за грехи совершенные словом — птицей или зверем.

В связи с тем, что более подробно освещены во многих исторических документах жизнь, быт и законы Древних Греции и Рима, в этом материале касаться этой темы не будем, а сразу перенесемся в V век нашей эры.

Во времена правления Хлодвига обычаи систематизировали и издали в виде законов, которые и в наше время имеют свою актуальность.

К примеру:

— Если кто сядет на чужого коня без позволения хозяина, принуждается к уплате 30 солид (золотая монета).

— Если кто назовет другого уродом, присуждается к уплате 3 сол.

— Если кто назовет свободную женщину блудницей и не докажет этого, присуждается к уплате 45 сол.

— Если кто назовет другого зайцем или волком, присуждается к уплате 3 сол.

— Если же свободный вступает в брак с чужой рабыней, он и сам вместе с нею должен стать рабом.

— Если кто увезет чужую жену от живого мужа, присуждается к уплате 200 сол.

— Если кто украдет годовалое или двугодовалое животное, присуждается к уплате 15 сол.

В виду ограниченности газетной полосы, здесь доведена до уважаемого читателя только мизерная часть того, что человечество накопила за 4 тысячи лет в области юриспруденции.

Нынешним законоведам, чтобы создавать новые, хорошие и действующие законы желательно досконально и подробно изучить юридические документы Древнего Востока и Античного мира.

Н. А. Платонов, 16 мая 1998 г.

ТУПМАЛЛИ

Ыра ята тивĕçнĕ (П. Павлов) 3
Кирпĕч, каратэ, купас, калем... (В. Абрамов) 5
«Кану каçĕ е сцена çинчи казино» (Ю. Листопад) 7

Н. А. ПЛАТОНОВ СТАТИЙСЕМ

Француэсем — Шорккара 8
Ишлейри медсестра 9
Кун пекки пулманччĕ 11
Кандидатăн суйлав кунĕ 12
Çулĕ такар пултăрчче 14
Талант 15
Каратисты Чувашии — лучшие в России 16
Ĕçчен çемье 17
Елчĕк тăрахĕнче 19
Кăкеçри тухтăрсем 21
Пирĕн çемье тусĕ 23
Ишлейре — газ 24
Ĕнерхипе паянхи — çĕрле пĕлĕт пек 25
Мы рады помочь 27
Пĕр улмипе тутă пулăи 28
Лев Румянцева — парне 29
Пуху хыççăн концерт 29
Курмасăр ан юлăр 31
Шупуççыннине хисеп туни пулĕ 32
Район чысне те хŭтĕлĕç 33
Хаммурапи — царь Вавилона 34
Патшалах Канашĕ йăнăшмарĕ-ши? 35
Суйлава каймалла-и? 37
Виноградовсем 38
Керешŭ вăйланать 39
Пур енлĕн пиçĕхнĕ 39
Пултарулла коллектив 41

Л. А. ПЛАТОНОВА СТАТИЙСЕМ

Фольклор ушканĕ — Елчекре 42
Манал ялĕнчи уяв 45
Ыыхрав хыççăн йыхрав 47
Туслăх пытăр ĕмĕре 49
Хуранлах ялĕнче, уявра 51
Шорккасем Шамăшра шăрантарчĕç 52

Н. А. СИРЕНЕВ СТАТИЙСЕМ

Çентерŭшен шăл та шел мар 54
Виççĕмĕш хут 55
Лайăх ĕçлепĕшĕн — велосипед 56
Каратэ — Иккассинче 57
Кам — шкула, кам — киле 59
Футболистсен турнирĕнче 60

Каратэ, кирпёч... 60
Шкула — «Таван ен» 61
Ене илме те çитет 62
Вайă татса парĕ 62
Пĕрремĕш суйлавçă 63
Элидеми хăрушлăхĕ пур 64
Пуласлăхĕ вĕсен пысăк 64

Н. А. ПЛАТОНОВ, Л. А. ПЛАТОНОВА

В РОДНЫХ КРАЯХ

На чувашском и русском языках

Под редактированием
Ю. П. Степанова (Листопада)

Художественное оформление
Г. И. Ильина

Фото **Г. В. Семенова**

На обложке: **Людмила и Николай Платоновы.**

Сдано в набор 2. 11. 98 г. Подписано к печати 12. 11. 98 г. Формат 60x84/16
Бумага газетная. Гарнитура литературная. Печать высокая. Учетно-изд. лист 4,0. Тираж 500 экз. Заказ № 12. Лицензия № 040807 от 10. 04. 97 г.

Кугесьская типография Государственного комитета по печати ЧР
429500 Чувашская Республика, Чебоксарский район,
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13